в. № 322
26-31
Г
ТКА НКП

ГОРНОСТАЕВ

# КИЛКЕПЕ-ВӖРЕН ЙАВМА ВӖРЕНЕР!

ЂАВА П. кӗскетсе куҫарнӑ

ЂӐВАШ РЕСПУП. КӖНЕКЕ КӐЛАРАКАН УЙРӐМ
ШУПАШКАР — 1926

Ф. З. ГОРНОСТАЕВ

ЉАВА П. кĕскетсе куçарнă

# КИЛКЕПЕ-ВĔРЕН ЙАВМА ВĔРЕНЕР!

Килкепе-вĕрен йавма, пăлавиксем тĕртме, тата сўсрен тĕрлĕрен урăх таварсем тăвас ĕçе пулăшакан кĕнеке

41 карттинкăллă

3917

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР — 1926

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Б.Советская, 6

Чувашлит № 664. Напечат. 3000 экз.

# УМĔНÇИ САМАХ

Çăваш Респуплĕкĕ—çĕрĕçлевлĕ Респуплĕк. Унта мĕн пурĕ 920 пин çына йахăн пурăнаҫ. Вĕсенçен 6 пине йахăн кăна кантурсенçе, уçрештенисенçе, йе савăтсенçе ĕçлесе пурăнаççĕ. Вĕсенçен те пулин пĕр пине йахăнăшĕ, çав вăхăтрах çĕрĕçĕнçен уйăрăлман: вĕсен йат çĕрĕ пур, вĕсем çав йат çĕрне сухаласа акса пурăнаççĕ. Çăваш Респуплĕкĕнçе акма йурăхлă çĕр 721102 теçеттин шутлаççĕ. Çĕрпе тăранса пурăнакан кил-йышсен шуçĕ 174900. Çаксене пăхсан, кашнă кил çине акмалли çĕр вăтамран илсен 4 теçеттин ытларах кăна тивет... Кашнă çын пуçне Çăваш Респуплĕкĕнçе 1630 тăваткал çалăш (кв. саж.) тивет. Вăл çĕр те пулин питĕ наçарланса çитнĕ, тырă-пулă наçар параҫ. Халçхи вăхăтра вăтамран илсен пĕр теçеттинрен çулшарăн ыраш мĕн пурĕ те 33—50 пăт çеç пулса пынă, çĕлĕ—26 пăт.

Çăваш Респуплĕкĕнçи вăтам кил-йышăн (5 çынăн) мĕн пур тупăшĕ çакăн çухлĕ пухăнаҫ: çĕрĕç туса, тата выçăх-çĕрлĕх усраса 178 пăт ырашлăх, урăх майпа 27 пăт ырашлăх, мĕн пурĕ 205 пăтлăх. Тырă-пулă тунă çĕре, выçăх-çĕрлĕх усранă çĕре 77 пăт кайаҫ. Вара пĕр çемйене пурăнма мĕн пурĕ те 128 пăт çеç йулаҫ. Вĕсенçен те 27 пăтлăхне тĕрлĕ ремеслапа (алă ĕçпе), ĕçлеме кайса тупнă (1923 çулти çыхвăрсем). Çак 27

пăга. хăшĕ пĕри çăпата тукаласа сутса, сĕт-çу, çăмарта, çăм-тир, тата урăх, ахаҫ те килтавраш ĕнҫе кирлĕ йапаласене сутса тунă; хăшĕ пĕри улма-купăста туса сутнă; хăшĕ—пĕри, вара, нимĕн те тума вăй çитереймен, йе ал çаварăнман пирки, выçă та ларнă. Каласан та, пирĕн ҫăвашран ыйткалакансем питĕ нумай. Вĕсем йал тарăх çӳренипе тăранаймаççĕ те хаҫхи саманара.—Мĕн парĕ вĕсене хăй те выçакан ҫăваш йалĕ?—Хуласенелле—Хусана, Мускава—туртăнаççĕ вĕсем.

Маттуртарах пурăнас текен ҫăваш çемйинĕ, çĕрçĕне муталаннисăр пуçне, тĕрлĕрен аласталăха вĕренсе уçă кураҫ. Ҫăваш Респуплĕкĕнҫе ҫăпта çапакан нумай. Унтан, тĕрлĕрен платниксем, стоҫарсем, тимĕрçĕсем. Çак аласталăхсемпе ҫылай ҫăваш уçă курса тăранса пурăнаҫ. Анҫах, пирĕн Респуплĕкре тата тепĕр аласталăхпа уçă курма май пур. Вăл—сӳс-кантăр акса, килкепе-вĕрен, сип-шпакат, тĕрлĕрен кутлăх-ремен тăвасси. Сӳс-кантăр таварĕ халĕ Респуплĕке йе Хусантан, йе Вылă пасарĕнҫен, ҫи йышлăн тата Лыскавран килет. Килте кантăр акса хăйсемех килкепе-вĕрен тăвакан Респуплĕкре сахал. Вăл ççе Вăрмар станси патĕнҫе, Нурăс, Йелҫĕк, Тури Кĕçнерни тавраш ĕсенҫе кăна кăшт-кашт тукалаççĕ. Анҫах вĕсем те пĕр килкепе-вĕрен, кутлăх, çăпата кантрисемсĕр пуçне урăх нимĕн те тумаççĕ.

Сӳс-кантăртан, саксемсĕр пуçне, тата ҫылай йапаласем туса сутма пулаҫ.—Ҫи малтан—машшинапа тырă вырнă ҫухне кĕлтесене çыхса пымалли веска (вязка), тата сутă-илӳ тавраш ĕнҫе таварсене çыхмалли шпакат;

унтан, тӗрлӗрен ҫинҫе кантрасем, канатсем, ременсем, урайне сармалли пӑлавиксем, маттӑсем тата урӑх йапаласем те тума пулать. Ҫак таварсене ытакан сахал мар. Вӗсене тума йури тунӑ савӑтсем, хапрӑксем пур. Анҫах. вӗсем вӑрҫӑҫҫен те кирлӗ таран тавар тӑваймаи, халӗ пушшех ҫителӗхлӗ ӗҫлеймеҫҫӗ. Вӑрҫӑҫҫенех Орйол, Калукӑ, Курск, Ҫерникӑв, Мускав, Минскӑ кӗпӗрнисенҫи хресҫенсем ҫак сӳс-кантӑр аласталахне туса пурӑннӑ. Вӗсем ҫав сӳлте кӑтартнӑ йапаласене хӗл каҫиҫҫенех ӗҫлесе, ҫулталӑкӗпех тӑранса пурӑннӑ. Пӗр сӑмахпа каласан, ку ӗҫе тума ӳркенмен ҫӑваш ҫемйийӗ нихӑҫан та выҫӑ ларас ҫук. Вӑл ҫӑнни акӑ ҫак ҫыхвӑрсенҫенех паллӑ: теҫеттин ҫӗр ҫинҫе ыраш вӑтамӑн шутласан 33—50 пӑт пулать, тенӗҫҫӗ. Кантӑр аксан, ҫав теҫеттинранах 50 пӑт ҫеҫ кантӑр вӑрри, тата, сахалран та, 30—40 пӑт сӳс шутласан та ырашран кантӑр акни усӑллӑрахххи курӑнать, мӗншӗн тесен 50 пӑт ыраш (йулашки ҫулсенҫи вӑтам хакпа шутласан, вӑл хак—1 т. йахӑн) 50 т. ҫеҫ тӑрать, анҫах, 50 пӑт кантӑр вӑрри (Йетӗрнери ҫу савӑҫӗ хакӗпе—1 т. 20 пус) 60 т., тата 40 пӑт сӳс (Шупашкар пасарӗнҫе пӑҫӗ—1 т. 10 пус)—44 тенкӗ, пӗтӗмпе ҫӗр те тӑватӑ тенкӗ.

Ҫапла, сӳс-кантӑртан нимӗн йапала тумасӑрах сутсан та, теҫеттин ҫӗр 104 т. услам парать (ырашран 54 т. ытларах), анҫах кантӑр-вӑрринҫен ҫу туса, сӳсӗнҫен килкепе-вӗрен йавса сутсан, ку услам 200 тенкӗрен те иртме пултарать.

Усӑллӑ аласталӑха ҫӑваш та вӗренсе усӑ курма пултартӑр тесе, ҫак пӗҫик кӗнекене кӑларма шухӑш тытнӑ.

Ку кӗнекене ҫăваш ăстисем кăтартнине те тата Вепӗр, иншенер Фетăрăв, канат маçтăрӗ Петров, акроном Солоттарйов, Корностайӗв тата урăххисем те кăларнă вырăсла кӗнекесем ҫинҫе çырнине те асра тытса çырнă.

Ҫ А В А П - ң ӗ.

# I. КИЛКЕПЕ-ВЁРЕН ЙАВМАЛЛИ СЎС.

## Кантăр-пусан кулътурĕ.

Кантăр-пусана Раççейре пур çĕрте те акаççĕ. Ђăвашран та кантăр-пусана курман çын пулас çук. Анђах, ђăваш хушшинђе кантăр-пусана питĕ сахалăн, килти нуштасене саплама кăна тăваççĕ. Пуринђен ытла кантăр-пусана Орйол, Калукă, Курск, Ђерникăв, Мускав, Минскă кĕпĕрнисенђи хресђенсем йышлăн акса тăваççĕ. Сăмахран, кантăр-пуса акса тунипе çав кĕпĕрнесенђи хресђенсем питĕ пысăк услам кураççĕ. Ăна Сотсиалисăмпа Совет Респуплĕксен Сойусĕн çурçĕрти кĕпĕрнисенђе те акаççĕ, анђах вăл унта питех йатăнса пулмасť.

Кантăр вăл çăра çитĕнет, унăн кĕпçи патак пек хытă, тата тађка (пысăккă). Кантăрăн çўллĕшĕ (тăршшĕ) лайăх ăнса пулнă çул 2 меттăр йахăна (ик аршăн çурра) çитет. Кантăр, ўснĕ ђухне питĕ ђыхăнтаракан шăршăллă. Унăн çулђисем етем ывăç тупанлĕ, кашни йуппи, вара, вăрăм çĕçĕ пек шĕвĕр, хĕррисем çурла шăллĕ, кашни çулђă пиллĕкшертен пуçласа вуннăшар йуплĕ.

Кантăрăн кĕпçи (туни) икĕ тĕслĕ пулаť: хăшĕсем çимĕç пулас ђеђеклĕ—вĕсенђен тĕш (вăр)

пиçсе пулать; хăшĕсем шăртлă, пуш пуçлă, ђеђеккисем хисеплĕ çеç, кĕпçи йĕри тавра шерепеленсе ларассĕ. Кантăра, çавăнпа, икĕтумлă курăк теççĕ. Çимĕç пуласлă кĕпçисенђен (тунисенђен) кантăр пулать, пуш пуçлисене пуса теççĕ.

## Кантăр-пуса акас çĕр (тăпра).

Кантăр-пуса акас çĕр (тăпра) вăйлă, мамăк пек, çемсе пулмалла. Кантăр кăшт хăйăрлă хура тăпрана йе кăпка тăмлă хура тăпрана йуратать. Вăл ытлашши тăмлă мар лăйăмлă çĕрте те аван ÿсет. Кун пек вырăнсем йе кÿлĕсемпе йухан çырмасем хĕрринђе, йе тата пĕвесене типĕтсен пулаççĕ. Çавăнпа та кантăра лупамсенђе аванрах ÿсет, теççĕ. Сăртсем çинђе, тата тађка хура тăпра çинђе кантăр вуçех пулмасть, пулсан та ытти çĕртинђен кайарах пулать. Тађ тăмлă, сивĕ, йăвăр тăпра çине аксан кантар калама çук хытă сÿслĕ пулать. Ђак хăйăр çинђе вăл ÿсмест те. Кантăр акас çĕр тикĕс, тÿрĕ айлăмра пулмалла.

Кантăр вырăнĕ тунă ђухне, ђас-ђасах, тăпрана кура тумаççĕ. Ĕçлеме, тислĕк тăкма çăмăл пултăр тесе ăна кил çывăхнерех тума хăтланаççĕ. Анђах, çапла, кантăра кирлĕ тăпра çине акманни питĕ сийенлĕ.

## Кантăр вырăнĕ хатĕрлесси.

Кантăр вырăнне сивĕ, çурçĕрти çил тивмен çĕре тумалла. Сивĕ çил çинђе кантăр нађар сÿслĕ

пулаť. Çавăнпа та кантăр вырăнне, ђас-ђасах пур йенђен те çатан-карта тытаççĕ.

Кантăр вырăнне пĕрмайах навус тăкса çемçетсе тăмалла. Ђи пылаклă навус вара—лаша навусĕ. Лаша навусĕпе çемçетнĕ çĕр çинђе кантăр лайăхрах пулаť: ђаш шăтаť, тикĕс, хăватлă çитĕнет, çум-курăкне пуç памасť. Лаша навусĕсĕр пуçне тата кантăра ђăх-ђĕп, кађака-сурăх тата етем навусĕ те килĕшет. Çакăн пек навус пулмасан кăна ĕне-выљăх навусĕ тăкма йураť кантăр вырăнне. Анђах, навуспа навус та пĕр пек мар: хăшĕ çĕререх панă, хăшĕ çĕрмен. Кантăр вырăнĕ çĕререх панă навуса ытларах килĕштерет. Уламлăрах, çĕрменрех навус кантăра вăйлă ўсме памасť, тата кантăр тикĕс шăтмасť. Шăрăх çанталăкра çĕрмен навус çине акнă кантăр сарăхса, хăрса лараť. Ерне, шăрăх çанталăкра кирек мĕнле навуслă вырăнта та, навусĕ ытлашши пулсан, кантăр ахаљ те пўсĕр пулаť, вăрлăхĕ те çăмăл, сахал пулаť.

## Кантăр акасси.

Кантăр вырăнне кĕркуннех сухаласа хăвармалла. Кĕркунне сухаланă тăпра нўрелсе, кăпкаланса выртаť. Çуркунне, вара, çураки тунă ђухне, навус тăкса тепĕр хут сухаламалла. Кантăр вырăнне сухаланă ђухне суха кассисене, кантăр вырăнĕ сĕвек пулсан, çав сĕвеклĕхе урлă выртарса пымалла. Сĕвеклĕх тăрăх тунă суха кассисемпе çăмăр шывĕ, çĕр сĕткенĕсене шăлса илсе кайаť те, кантăр вырăнне вăйсăрлатса хăвараť.

Сухаланӑ кантӑр вырӑнне, ҫум-куракҫене путлантарма, пӗрер хут сӳремелле, унтан кантӑрне акмалла та, тата икӗ хут сӳремелле: пӗрре ана (кантӑр вырӑнӗ) тӑрӑх, тепре ана урлӑ. Акса пӗтерсен, ҫум ҫумлама, пуса татма ҫӑмӑл пултӑр тесе, анан сӗвеклӗхӗ урлӑ, кашни икӗ утасранах сухапуҫӗпе йӑрансем туса хӑвармалла. Ҫапла туни, тата, ҫулла ҫӑмӑр шывне йӑрансенҫе ытларах тытса тӑрса кантӑр вырӑнне нӳрӗ тытма пулӑшать.

Кантӑр лайӑх пуласси акмалли вӑхӑта пӗлсе акнинҫен килет. Ытлашши тип ҫанталӑкра аксан, вӑрлӑх ҫас сӑмсаланайман пирки, ӑна ҫурмаранах тӗрлӗрен хурт-кӑпшанкӑсем, кайӑксем, шӑшисем ҫисе йараҫҫӗ. Вара кантӑр сайран шӑтать. Ытлашши нӳрӗ ҫанталӑкра аксан, тата ҫӑра акнӑ пулсан кантӑр ҫасах шӑтса тухать, анҫах кӗпҫи хавшак пирки, кантӑр куҫӗ ҫӗрме пултарать. Кантӑра ирхи сивӗсем иртсен тин акмалла, мӗншӗн тесен вӑл сивве тӳсеймест. Вара, ҫӑмӑлтарах тӑпра ҫине ир-терех акмалла, йӑвӑр, плутнӑ ҫӗре тӑхтарах акмалла. Ытлашши кайа йулса аксан, тата, кантӑр, шӑрӑх ҫанталӑка тӳсейменнипе, путланма пултарать. Кӑнтӑрлари кӗпӗрнесенҫе кантӑра ҫӑв уйӑхӗн пуҫламӑшӗнҫе акаҫҫӗ, пирӗн патра ҫӑв уйӑхӗн варринҫе акма йурать. Акассине лӑпкӑ, ӑшӑ, тата нӳрӗллӗ кун акмалла. Май килнӗ таран, каҫ пулттипе акма тӑрӑшмалла. Аксанах сӳрелесе хӑварас пулать.

Майлӑ акса хӑварма пӗлнӗ пулсан, кантӑр 6—8 кунтанах шӑтса тухать. Акнӑ хыҫҫӑнах вӑйлӑ, йух-

тармалла ҫăмăр ҫапса ҫунă пулсан, кантăр вăрлăхĕ ҫĕр айне тарăна кайса, ҫĕрме пултарать. Ҫавăнпа та, ҫапла вăйлă ҫăмăр айне пулнă кантăр анине, ҫăмăр иртсенех ҫăмăл сÿрепе пĕр хут сÿрелесе тухмалла.

## Кантăра пăхса ÿстересси.

Йĕпе-сапаллă ҫул кантăр ани ҫинҫе кантăр калҫипе пĕрле тĕрлĕ ҫум шăтса тухать. Ӳсес кантăра кирлĕ нÿрĕлĕхе кирлĕ мар ҫум курăкĕсем ан ĕмҫҫĕр тесе, кантăр анине ҫумлама тăрăшмалла. Ҫумланă ҫухне кантăра таптама йурамасть: йăран тăрăх тăрса ҫумламалла. Кантăр вăйлă ҫитĕнет. Ҫавăнпа та вăл ҫум-курăкне хăйех путлама пултарать те, ăна пĕрререн ытла ҫумламалла та пулмасть.

Кантăр шăркаланса иртсенех, пуса татмалла пулать. Пусана, вăл хăй ҫеҫекĕсен ҫинҫи тусанне тăкса пĕтерсен тatаҫҫĕ. Пусана татмалла пулнине ҫапла пĕлеҫҫĕ: пуҫне (ҫеҫекне) тытса ывăҫ тупанĕ ҫине ҫапаҫҫĕ; ҫеҫек тусанĕ пăрлатса вĕҫмест пулсан, пусана татма та йурать. Тата пусана татнă ҫухне ҫакна та пĕлмелле: ăна пир тумалли сÿсшĕн татаҫҫĕ пулсан—симĕслерех татмалла. Симĕслерех татнă пусан сÿсĕ ҫемсе, тата ҫирĕп, таса пулать. Сÿсĕ вĕрен-килкепе йавас ҫĕре кăна кирлĕ пулсан, пусана кантăрпа пĕрле татаҫҫĕ.

## Кантăр татасси.

Кантăра татмалли вăхăта пĕлесси питĕ кирлĕ. Ăна ытлашши иртерех татсан, сÿсĕ те сахал пулать,

тата вăрлăхĕ те нађар, выçă пулаť. Ытлашши кайа йулса татни те йурамасť: вăрлăхĕ лайăх пулсан та сўсĕ нађар, муртак.

Кантăра, унăн çеçкисем (çуљђисем) шанма тапратсан татаççĕ. Çуљђисем шанма тапратнă çĕрелле, унăн пуçĕн айĕнђи вăррисем те симĕсĕн курăнаççĕ. Татасси нимĕн арăш-пирĕшши те çук: пĕр пекрех кĕпçеллĕ кантăра, пĕрле туса, кăклаймалла. Кăкласа кăларсан, кăкĕ çинђи тăпрана кăшт çеç ура тупанĕ çине çапса тасатмалла. Кантăра, вăррисем тухса сирпĕнесрен, ытлашши луђăркама йурамасť. Кăклас умĕн, кантăр çеçкисене, ывăçпа çўлтен айалалла сăтăрса антармалла. Пĕр-ик ывăç татсан, ăна кĕлте (çурăм) туса ыраш улăмĕпе икĕ тĕлтен пиçиххилесе çыхмалла. Шутлама канас пултăр тесе, çыхнă çурăмсене пилĕкшерĕн, йе вунш'арăн тĕм туса пымалла. Тĕмне çапла тăваççĕ: пĕр çурăмне ана урлă хураççĕ. Ун çине ытти çурăмсене, пуçĕсене пĕр çĕре туса, виç пушăтпа йавнă кантăра йевĕрлĕ, пĕр-пĕрин çине хурса пыраççĕ. Çурăмсен пуçĕсене çўлелле туса хурса пымалла, кăкĕсене—çĕр çумнелле. Кун каçађђен татнă кантăра, çав кунах анкартине турттармалла. Урапа çине тийес умĕн, йури илсе тухнă йуман муклашки çинђе, кашни çурăмĕсенех тымарлă куђĕсене çивĕђ пуртăпа касса пăрахмалла. Çурăмсен пуçĕсем айне, кантăр вăрри сирпĕнсе сайа кайасран шăналăк сармалла.

## Кантăр вăррине тĕшлесси.

Кантăра икĕ тĕслĕ тĕшлеççĕ (çапаççĕ). Хăшĕсем кантăра тĕшлеђђен çурăмсен вăрăллă пуçĕсене (тăррисене) çурăмĕнђен татса уйăраççĕ. Ăна çапла тăваççĕ. Урапа çине шăналăк сараççĕ. Пĕр çын урапа çине çурла илсе хăпарса тăрать. Ăна тепĕрри айалтан кантăр çурăмĕсене парса тăрать. Урапа çинђе тăраканĕ айалтан панă çурăмăн пуçне сула хай аллипе тытать те, сылтăммипе çурлапа çурăмăн (кĕлтен) пуçне татса шăналăк çине пăрахать, айалта тăраканĕ, вара çурăмăн куђĕсене йури тунă вĕрлĕк çине сулăласа пырать. Çапла туни кантăра шыва пăрахассипе тĕшлессине пĕр-пĕринпе çыхса тăмасть: тĕшлесси хăй майĕпе пулса пырать, йĕпетесси—хăй майĕпе. Çурлапа татнă кантăр пуçĕсене аврампарне, йе авăна—типĕтме хураççĕ. Анђах кантăр пуçĕсене пĕр-пĕрин çине алçиллĕ пусарса хума йурамасть. Пусарса хурсан кантăр пуђаххиссне çил тивменнипе вĕсем йўçĕхме пултараççĕ.

Хăшĕсем, вара, кантăр çурăмĕсенђен пуђаххи сене татмасăрах тĕшлеççĕ. Тĕшлессине çапла тĕшлемелле: йĕтем çине йуман хăма хураççĕ. Çав хăма çине кантăр çурăмĕн пуçне хураççĕ те çийелтен, çурăмне çавăра-çавăра, патаксемпе, йе тукмаксемпе пуђахсенђен айаларах шаккаççĕ. Çапла шакканипех кантăр тĕшленсе пырать. Тукмакпа шакканă ђухне кантăр пуђаххисенђен айаларах шаккамасан, кантăр вăрри (тĕшĕ) аманма пултарать.

Пĕрер хут çапса та тĕшленмен çурăмсене тепĕр хут çил çине тăратса куштармалла.

## Сӳсе хутасси (кантăра йĕпетесси).

Кантăр кĕпçи висĕ пайа уйăрăлат. Пĕр пайĕ—кĕпçен, патак пек, хытă шăммийĕ. Вăл кантăра йĕпетеҫҫен хулă пек писĕ, авсан та хуçăлмаст. Иккĕмĕш пайĕ—шăммипе хуппин хушшинҫи сĕткенĕ. Вăл çилĕм пек, кантăр хуппине шăмми çумне сыпăçтарса тăрат. Виççĕмĕш пайĕ—кантăрăн çийелти хуппийĕ. Вăл кантăра шыва хурса, ăна шăмми çумне сыпăçтарса тăракан çилĕм пек сĕткенне ирĕлтерсе пĕтериҫҫенех хуп пек хытă. Шывра выртнипе вăл сăйланса (хĕлхемленсе)—с ӳ с пулат. Çав сӳсе кантăр шăмминҫен уйăрса илесшĕн, тата сӳсе çемçетесшĕн кантăра шыва пăрахса шӳтереççĕ. (Ҫăвашсем ăна—„сӳс хутмалла“ теççĕ). Ăна çапла тăваççĕ. Икĕ шаҫҫа илеççĕ те, куҫĕсене картса икĕ шит тăршшĕ таҫкарах кантрапа пĕр-пĕрин çумне сыхаççĕ. Кантăр çурăмĕсене, вара, кутăн-пуçăн çав шаҫҫасем хушшине хурса шаҫҫисен тăррисене пĕр-пĕрипе сыхаççĕ. Çапла тунă сулăсене йухман шыва пăрахаççĕ. Сулăсене шыва путарма сулăсем çине тăпра, йе ҫулсем купалаççĕ. Çывăхра пысăк шыв пулмасан сӳс хутма, пĕҫик шырлансене йури картласа пĕве тумалла. Йе шырлан та çук пулсан, сӳсе лаҫакаллă (шурлă) вырăнта йури ҫавса тунă çăлсене хутмалла. Çапла тума та май килмен çĕрте сӳс çурăмĕсене

пĕрмайăх урапапа çӳрекен çулсем çине сарса тухаççĕ. Çăмăр çунипе кантăр çав çулсем çинђех шĕвсе, пулса выртаť, анђах, çапла тунă кантăр сӳсĕ, вара питĕ хытă, шăртлă пулаť. Кантăра хутма (йĕпетме) пур шыв та йурамасť. Таса, тăрă, çемçе шывра сӳс лайăхрах пулаť. Тутăхнă, исвĕслĕ, тăварлă хытă шывра сӳс вуçех пулмасť. Тутăхнă шывра сӳс хăмăр, тĕксĕм тĕслĕ пулаť, исвĕслĕ шывра—муртак. Пăтранђăк, лăймаллă (йушкăнлă), хăйăрлă шывра сӳс тĕксĕм, тĕссĕр пулаť.

Шыва хутнă (путарнă) кантăра вăхăтра кăлармa пĕлмелле. Васкаса кăларсан кантăр шăммисем те çĕрмен, сӳсĕ те пулман пулма пултараť. Шывра ытлашши выртнипе, тата, сӳс çĕрсе кайма пултараť. Çавăнпа, сулăсене шыва путарни пĕр ерне пек иртсен, вĕсенђи ђас-ђасах пĕрер кантăрне туртса кăларса, кăмака çинђе типĕтсе, тылласа пăхмалла. Ерне, сӳсе лайăх хутса тума пĕр каласа кăтартнипех вĕренме пулĕ тесе шутламалли çук. Лайăх сӳсе, пĕрмайăх сӳс-кантăр ĕçне туса писнĕ ăстаçăсем çеç тума пултараççĕ.

## Шывран кăларнă кантăра типĕтесси.

Сулăра выртакан кантăр пулса çитсен ăна кăларса, шыв хĕрринђех çурăмсене пĕр-пĕрин çумне тăратса кушăхтармалла. Пĕр ик-виç кун тăрсан кантăра, хĕвелсĕр кунсем тăраççĕ пулсан, карта çине саркаласа тăратса тухмалла. Кунта ăна пур йенђен те çил вĕрсе типĕтет. Çил çапакан сарайсем пулсан,

сӳсе типĕтме ҫав сарайсене кĕртсе тăратсан та аван. Хĕвелпе ҫăмăр ҫинђе ытлашши нумай тăрсан сӳс кавсăлса кайаť, тата тĕсне ҫухатаť. Ђылай типсен, сӳсе тыллама тытăнаҫҫĕ. Ăна тыллађђен малтан мунђара, йе кăмака тăрринђе типĕтеҫҫĕ. Анђах, сӳс нумай пулсан, ăна кăмакасем тăррисенђе типĕтсе ҫитерес ҫук. Ҫавăнпа та нумай сӳсе ҫăмăр тивмен сарайсенђе типĕтнипех тыллама йураť.

## Сӳс тылласси.

Сӳсе тылăпа тылаҫҫĕ. Тылла ҫапла тăваҫҫĕ: ђăрăш кутне (муклашкине) илсе пĕр пуҫне икĕ ураллă тăваҫҫĕ; муклашкин ҫурăм йенне (курпунне) ђавса паслă тăваҫҫĕ. Пасĕ ҫине йуманран хурта (хурса) туса, айалтан хурсине тимĕр пăтапа тылă ҫумне ҫыпăҫтараҫҫĕ. Хурсана сылтăм алăпа ҫĕклесе тылă ҫине сулахайпа сӳсе хураҫҫĕ те хурсипе пуса-пуса кантăр шăммине ватаҫҫĕ. Тыллама пĕлменнипе сӳс ҫӳпĕллĕ пулаť, тата тылă хурсипе ытлашши хирсе туртсан сӳс пайрăкĕсем татăлса пĕтеҫҫĕ. Ҫавăнпа та сӳсе питĕ шайлă, васкамасăр тылламалла.

Тылланă сӳсе шăмăран тасатма, тата сӳс тĕсне ҫухатакан йапаласенђен уйăрма силлеҫҫĕ (касаҫҫĕ). Ку ĕҫе питĕ ăста, алҫавăрнăҫуллă ҫынсен тумалла. Сӳсе силлеме пĕлнинђен лăнђашка та сахал тухаť, тата сӳс те ҫемҫелет.

Сӳсе силлеме йури тунă каскăђ пур. Ал хурси пек пĕр аршăн йуман тăршшĕ патака икĕ йенђен

те кӑшт ђутласа (вартаса) мӑка ҫӗҫӗ пек туса ҫўхетеҫҫӗ (1-мӗш карт.). Ҫав каскӑђпа тыллана сўс ҫурӑмне сулахай алла ҫавӑрса тытса сӑптӑрса касмалла. Каснӑ ђухне сўс ҫурӑмне пӗрмайах пайраса пымалла. Ҫапла каснипе сўс ҫурӑмӗнђи вӗт шӑмӑсем



1-мӗш карттин.

сўс ҫумӗнђен уйӑрӑлса сирпӗнеҫҫӗ. Ҫурӑмӑн пӗр пуҫне тасаласан, ӑна тепӗр пуҫӗнђен тытса тасаламалла. Йулашкинђен, икӗ ҫурӑма пӗр ҫӗре туса касаҫҫӗ те, сўсе туралама тытӑнаҫҫӗ.

## Сўсе тураласси (шӑртласси).

Килкепе-вӗрен йавма хатӗрлекен сўсе те, пир тума хатӗрлекен сўсе те тураламасан (шӑртламасан) йурамаст̆. Ӑна сўсе ҫемҫетме хӗлхемсене пайраса уйӑрма тӑваҫҫӗ.

Килкепе-вӗрен йавма хатӗрлекен сўсе тураламалли турана ҫапла тӑваҫҫӗ. 2 фут ҫурӑ ҫўлӗш сак тӑваҫҫӗ. Унтан хулӑм йуман хӑми ҫине хӗреслесе 6—7 ӗрет, сўре шӑлӗсем пек, хурӑҫ шӑлсем ҫапаҫҫӗ. Кун пек тура иккӗ пулмалла: пӗрин (калӑпӑр, 1-мӗш тура) шӑлӗсем тӑршшӗ 7 т̆уйӑм, шӑлсен хӑма ҫумӗнђи куђӗсем ҫур т̆уйӑм хулӑмӗш пулмалла. Туран шӑлӗсем пӗр-пӗринђен 1 т̆уйӑм ҫурӑран тӑмалла. Тепӗр турин шӑлӗсем 4—5 т̆уйӑм



3917

тăршшĕ, çур ţуйăм хулăмĕш пулмалла. Пĕр-пĕринђен, ку туран шăлĕсем, 1 ţуйăмра пулмалла (кăна иккĕмĕш тура, тейĕпĕр). Турэсен шăлĕсем çип-çивĕђ пулмалла. Çӳлте каланă сакăн икĕ вĕçне çак турасене, шăлĕсене çӳлелле (месерле) туса, хураççĕ (2-мĕш карт.) Вара, тылласа, силлесе (касса) хатĕрленĕ сӳс çурăмне алла илеççĕ те, 1-мĕш турапа тураççĕ.



2-мĕш карттин.

Туранă ђухне, сӳс хĕлхемĕсен çумĕнђи шăмăсем те сирпĕнсе тухаççĕ, тата сӳс хĕлхемĕсем те вĕтелеççĕ те, сӳс çемçелет. Канат йавма хатĕрлекен сӳсе çак 1-мĕш турапа туранипех çитет. Килкепе-вĕренсем, тата урăх йапаласем тума хатĕрлекен сӳсе, вара, иккĕмĕш турапа та турамалла. Çак турасемпе сӳсе туралама пĕли-пĕлми çынăн йурамасţ: сӳсе те пăсма пулаţ, тата алă-пӳрнесене те çĕмĕрме, суранланма ђасах. Çавăнпа та сӳсе туралаканăн питĕ ăста пулмалла, тата туралана ђухне ђăрсăрланни килĕшмест *).

*) Кĕпе-йĕм тума хатĕрлекен сӳсе сысна шăртĕнђен тунă шăртпа шăртлаççĕ.

Сӳсе тураланӑ ђухне тусан, пӑрах вӗҫет. Вӑл пӑрах етем ӑшне кӗрсе питӗ каплантарать̆, ӗсӗрттерет, кӑкӑра тытать̆. Вӑл пӑрахпа сывлакан ђасах ђире йерет. Ҫавӑнпа, сӳсе пӳртре турама йурамаст̆. Ӑна йе ҫеникре, йе ампар айӗнђе турамалла.

Сӳсе темӗн ђул ӑста ҫын тураласан та, ҫурӑмӑн варри, ҫапах та, тураланмасӑрах йулать̆. Ҫурӑм варринђе, татӑлнӑ хӗлхемсем тата сӳс шӑммисем, йулаҫҫӗ. Сӳс ҫурӑмне тасалама тураланӑ хыҫҫӑн, йури



3-мӗш карттин.

тунӑ ункӑ-ҫӗҫӗпе ӗҫлеҫҫӗ (3-мӗш карт.). Ункӑ-ҫӗҫӗн тӑршшӗ 2 фут, сарлакӑшӗ 4 т̆уйӑм, хулӑмӗшӗ т̆уйӑмӑн 16-мӗш пайӗ пулмалла. Унӑн ҫивӗђђӗшӗ ҫурла пек, шалалла пулмалла. Ытлашши ҫивӗђ пулсан сӳс йӗркесӗр кавсӑлса пӗтет. Ҫӗҫӗн икӗ вӗҫӗ авӑнђӑк, шӗвӗр. Ҫав авӑнђӑк вӗҫӗсене йӑвӑҫ ҫине ҫапса лартаҫҫӗ.

Тураланмасӑр йулнӑ ҫурӑм варрисене ҫак ункӑ-ҫӗҫӗ ҫине ђикеҫҫӗ. Ҫурӑмӑн икӗ вӗҫне икӗ алӑпа тытаҫҫӗ те, ункӑ-ҫӗҫӗн ҫивӗђђӗшӗ ҫинђе кайалламӑлалла туртса хыраҫҫӗ. Унтан ҫурӑма тепӗр хут 2-мӗш турапа тураласҫӗ. Ҫапла тунӑ сӳс хаклӑрах таварсем ӗҫленӗ ҫӗре кайать̆.

Тураланӑ сӳс виҫӗ сурта уйӑрӑлат̆: 1) Тӑршшӗ 24 т̆уйӑмран 48 т̆уйӑма ҫитекен хӗлхемӗ лайӑх тасалнӑ сӳсе пӗрремӗш сурт теҫҫӗ. 2) Тӑршшӗ 10 т̆уйӑмран 20 т̆уйӑма ҫитекен таса сӳсе, иккӗмӗш сурт теҫҫӗ. 3) Виҫҫӗмӗш сурт, йе ланђашка тесе 3 т̆уйӑмран 9 т̆уйӑма ҫитекен сӳсе калаҫҫӗ.

1-мӗш турапа туранӑ ђухне, 20 т̆уйӑма ҫитеймен хӗлхемсем тура шӑлӗсем ҫумне ҫакланса йулаҫҫӗ. Ҫав хӗлхемсене пуҫтарса уйрӑм тураласҫҫӗ. Кунтан та йулнӑ хӗлхемсене тата уйрӑм тураласҫҫӗ. Икӗ турипе те тураласа тасатнӑ ҫурӑмсене икшерӗн пӗр ҫӗре туса суртӑн-суртӑн сыхаҫҫӗ.

1-мӗш сурт сӳсрен тунӑ йапаласем пуринђен те ҫирӗп пулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та суртпа сурта нихӑҫан та пӗрлештерме йурамаст̆.

## Хатӗрленӗ сӳсе пӑхса усрасси.

Ђас-ђасах, хатӗрленӗ сӳсе ҫийӗнђех ӗҫе кӳртме мехел ҫитеймест. Унӑн нумайђђен выртмалла пулат̆. Анђах, йепле килђӗ апла усранипе сӳс пӑсӑлма та пултарат̆. Нӳрлӗ, йӗпе ҫӗрте выртсан сӳс ҫӗрсе кайма пултарат̆, ытлашши ӑшӑ, типӗ ҫӗрте выртсан—кавсӑлат̆ те йавма та йурами пулат̆. Ҫапла, сӳсе усрасси питех ҫӑмӑл йапала мар.

Сӳсе усрамалли вырӑн тӗттӗм, сывлӑш ҫӳремелле пулмалла; кӑшт, ђух нӳрӗ вырӑнта сӳс ҫемҫелсе, сӗткенленсе выртат̆. Ҫапах та, сӳсе нумай выртарса усрама йурамаст̆. Ӑна ђасрах йе сутмалла, йе ӗҫе кӳртмелле.

Сӳс усрама тунӑ вырӑнта, ӑна суртпа суртӑн туса хумалла. Кашни тӗме ултӑ пӑтран ытла хума йурамасҭ. Хунӑ ђухне сӳсе пӗр-пӗрин ҫине хурса пымалла, кашни тӗм виҫӗ ӗрет хунӑ ҫурӑмсенђен пулмалла. Тӗмӗсем хушшине, кӗрсе ҫӳреме, тата ҫил тивтӗр тесе, пушӑ вырӑн хӑвармалла.

## II. КИЛКЕПЕ-ВӖРЕН ӖҪӖН ХАТӖРӖСЕМ.

### Сӗм йавмалли станук.

Килкепе-вӗрене темиҫе сӗмрен йавса тӑваҫҫӗ. Ҫав сӗмсене йавмалли (сӗмлемелли) стануксем темиҫе тӗслӗ. Хӑшӗсем—пӳртре ӗҫлеме ҫеҫ йурӑхлӑ, хӑшӗсемпе сӗмсем те сӗмлеме, килкеписене те йавма йурӑ. Вӗсене вырӑнтан вырӑна куҫармалла та, пӗр ҫӗртех ӗҫлемелле те тума йурӑ.

*Сӗмсене пӳртре* сӗмлемелли станука тепӗр тӗслӗ тата килкепе хултӑрђӗ теме те йурӑ (4-мӗш картт.). Ӑна ҫапла тӑваҫҫӗ. Кӑнђала лаппи пек хӑма вӗҫне пӗр шит сарлакӗш, ҫур шит ҫӳллӗш, виҫ шит тӑршшӗ йумана, йе хурӑна саваласа, вырӑнаҫтараҫҫӗ. Кунӑн икӗ вӗҫне те пасласа хурӑнтан, йе вӗренерен саваласа тунӑ тӑваткал икшер вершук, ҫӳллӗшӗ 2 шит ҫурӑ, стуйккӑсем ҫилӗмлесех лартаҫҫӗ. Ку стуйккӑсем, ахаљ хултӑрђӗн пекех, ҫӳлти вӗҫӗнђе шӑтӑклӑ пулмалла. Ҫак шӑтӑксем виттӗр, ђӑп-ђӑмӑр ҫавӑрса тунӑ йӗттӗр тирмелле. Йеттӗрин



4-мӗш картт.

пĕр вĕçĕнђе, стуйккăран тулалла пĕр шите йахăн тухса тăракан вĕçне шăтăклă (ункăллă) тунă, купђашка тăхăнттармалли, пўрне пыршшĕ, тимĕр пулмалла. Йĕттĕрĕн çак тимĕрлĕ вĕçĕнђе, стуйккăсем хушшинђе, вершук çурă хăмасенђен çапса тунă урапа пулмалла. Вăл урапа йăвăрăщĕпе йĕттĕре ывăç тупанĕпе çапса ларнипех сўс сĕмленсе пыраť.

Сĕме пўртре сĕмленĕ ђухне, ăна купђашка (5-мĕш карт.) çине сырса пыраççĕ. Купђашкине çапла тăваççĕ: шит çурăшар тăвата хăма татăкне варрисенђен шăтараççĕ. Хăмисене икшерĕн, арман çунађĕсем пек, хĕреслесе икĕ планккă вĕçĕсене çапса лартаççĕ. Çапла тунă купђашкана, сĕм сĕмлеме тапратсан, хултăрђăн тимĕрри çине тăхăнтартса лартаççĕ. Купђашки тимĕр çинђен шуса анасран, ăна тимĕр вĕçĕнђи ункă шăтăкĕ виттĕр патак тирсе çирĕплетсе лартаççĕ.



5-мĕш картт.

Пĕр купђашки тулсан, сĕме тепĕр купђашка çине сыраççĕ.

*Сĕме нумайăн* сĕмлемелли (йавмалли) станука çапла тăваççĕ (вăл тулта ĕçлеме кăна йурăхлă). Икĕ йупана, çўлти вĕçĕсене йуплĕ туса, пĕр çур аршăн хушă хăварса, çĕре ђавса лартаççĕ. Йупасен хушшине, 6-мĕш карттинккă çинђе кăтартнă пек тапăллă урапа туса вырăнаçтараççĕ. Кĕпçи виттĕр ђавсаллă (авăрлă) тимĕр хурта (хурса)

тиреççĕ. Урапи таппisем çине хуп кăшăл переççĕ. Ку урапаран пĕр виç утасрэн айаккалла йуман муклашкисене пасласа икĕ стуйккă лартаççĕ. Çав стуйккăсем çине пĕр-пĕр çирĕп йăвăçран тунă хупăђђа витеççĕ. Хупăђђа стуйккăсене те çирĕп тытать, тата кăлтăрмађсен ывăсне те хускалма памасть. Çак стуйккăсем хушшине хулăм хăмасенђен тунă ывăс çине висĕ кăлтăрмађ шăтарса лартаççĕ.



6-мĕш карттин.

Кăлтăрмађĕсене хурăн муклашкине çавăрса, варринђен тимĕртен ĕшлепкелетсе тунă йĕттĕр тиреççĕ (7-мĕш карттин). Тимĕр йĕттĕрсене стуйккăсем хушшинђи ывăс виттĕрех кăларса ывăс хыçĕнђен кайккăсемпех çирĕплетсе лартаççĕ. Кăлтăрмађ виттĕр кăларнă йĕттĕрĕн шĕлепки çине çеккĕллĕ тимĕр (круђђук) винттăласа лартаççĕ. Кăлтăрмађсене варринђен килкепе кĕрсе лармалла лупамлă (паслă) тăваççĕ. Унтан, пĕр-пĕр килкепеђе илсе икĕ вĕçне те пĕр çĕре туса сыпаççĕ те,

ăна икĕ йăлăллă туса пĕр йенђен икĕ йăлипех тапăллă урапан хупĕсем урлă йараççĕ, тепĕр вĕçĕсемпе круђђуклă кăлтăрмађсен пасĕсенђен уртса йараççĕ. Çапла тунă „привот“ килкепийĕ, карăнса тăрса пур кăлтăрмађсене те касмăкласа тăтăр тесе, круђђук ывăсне йуман стуйккă çумне винттăласа хытараççĕ. Килкепийĕ пушансан, ăна шыв пĕрхĕтсе шăршăнтарса тăраççĕ. Тапăллă урапана çавăрсан, пур круђђуксем те, шăлтăртатса, хăвăрт çавăрăнаççĕ те, сӳсе пĕтĕреççĕ.



7-мĕш карттин.



8-мĕш кар.



9-мĕш карттин.

Çак станук, çирĕпрех тусан, килкепе-вĕрен йавма та тӳсет. Ăна „ђăкăр“ теççĕ.

*Пĕр-труках* вун-вуник сĕм тумалли станук ҫап-ла пулаҭ: тăвата йенĕ те пĕр хулăмĕш, ҫирĕп йăвăҫ йупана ҫĕре ђавса лартаҫҫĕ. Ҫӳлти вĕҫне паслă тăваҫҫĕ. Вара ҫав пас хушшине, айалти йупапа пĕр пекех саваласа тунă тăрă лартаҫҫĕ (8-мĕш карт). Айалти йупипе тăрри ҫирĕп тăђђăр тесе, пас тĕ-




10-мĕш карттип.

лĕнђен стуйккăна икĕ тĕлтен тимĕр кăшăл пемел-ле. Тăррине, кирлĕ таран, савăл персе антармалла та, хăпартмалла та тумалла. Стуйккăн тăрри ҫумне хăмасенђен тунă икĕ ывăс ҫыпăҫтараҫҫĕ. Ывăссене

тӳпине пӗкӗ пек курпунлӑ тумалла. Вӗсен хӗррипе круҫҫуклӑ 7—12 кӑлтӑрмаҫ вырӑнаҫтараҫҫӗ.

Ку йупа хыҫне, пӗр аршӑнран тата тепӗр, ытлашши ҫӳлӗ мар йупа лартаҫҫӗ. Вара, ҫак икӗ йупа хушшине, тимӗртен авса тунӑ хурса (хурта) ҫине „махховик" тейекен кӗпҫеклӗ урапа кӗртсе лартаҫҫӗ (9—10 карт.). Ку „махховика" ҫавӑрсан ҫӳлти кӑлтӑрмаҫсем те кусҫӑр тесе, махховикпа кӑлтӑрмаҫсене привот ҫӗнӗпе пӗрлештереҫҫӗ.



11-мӗш карттин.

Кӑҫуне, тата, хӑш-хӑш кустарсем те, канат-вӗрен савӑҫӗсем те, тепӗр тӗслӗ станукпа ӗҫлеҫҫӗ. Вӑл станук ҫавӑрнӑҫуллӑрах, анҫах, ӑна тума кӑщт тӑкак тухаҫ, мӗншӗн тесен, вӑл станука пӗтӗмпех тимӗрпе ҫукунтан тумалла.

*Тимӗр* хӗрес туса, ӑна шӑп варринҫен шӑтарса тимӗр валлӑ (йӗттӗрлӗ), шӑллӑ урапа вырӑнаҫтарса лартмалла. Валӑн хӗрес хыҫне тухакан вӗҫӗ тӑваткал кӗтеслӗ. Ҫав тӑваткал кӗтеслӗ вал вӗҫне, ҫавса пек куклетнӗ авӑр лартмалла. Тимӗр хӗресӗн тӑват вӗҫне, шӑллӑ урапана перӗнсе тӑмалла, шеҫтӗрнеклӗ тӑват тимӗр круҫҫук тирсе лартмалла (11-мӗш карт.). Пысӑк урапине хыҫри авӑрпа

ҫавӑрма тапратсан, пӗҫӗк шеҫтӗрнӗксен палҫсисем урапа шӑлӗсен пасӗсене кӗрсе пынипе, станук ӗҫлеме те пуҫлаӗ.

*Сӗмленӗ сӗмсем* ҫӗре ан перӗнҫҫӗр тесе, йе пӗрпӗринпе пӗтӗрӗнсе ан кайҫҫӑр тесе, вӗсене хурса



12-мӗш карттин



13-мӗш карттин

(уртӑнтарса) пымалли кӗреплесем тумалла. Вӗсене тума ҫӑмӑл: йупа илмелле те, тӑррине шӑлсем лартнӑ хӑма тирсе лартмалла (12—13-мӗш карт).



14-мӗш карттин.

Кӗреплен шӑлӗсем сӗмсем йышлине кура пулмалла. 5 сӗм пӗр тӑруках сӗмлемелле пулсан, кӗреплесем 6 шӑллӑ пулмалла, вун сӗмшӗн 11 шӑллӑ кӗрепле кирлӗ, йе кӗреплесене йӗркерен лартса пымалла. Вӗсене сӗм тӑршшипе 5—6 ҫалӑшранах лартса пымалла.

Сӗмленӗ сӗмсене пуҫтарса усрамалла пулсан вӗсене пысӑк купђашка ҫине кумса хураҫҫӗ. (14-мӗш карт.).

Сӗмсенђен килкепе-вӗрен йавма тата икӗ хатӗр кирлӗ. Пӗри—муклашка, тепри—хӯре.

*Муклашкана* (15-мӗш карттин) ҫапла тӑваҫҫӗ: виҫ вершук пыршшӗ, шит ҫурӑ тӑршшӗ хурӑн муклашкине пӗр вӗҫне пӗђӗклетерех парса ђӑп-ђӑмӑр ҫавӑраҫҫӗ. Айӑккине йуман авӑр, виттӗр шӑтарсах, лартаҫҫӗ, тата темиҫе ҫӗртен йап-йака картса турушкӑ тӑваҫҫӗ. Шултӑра таварсене йавмалли муклашкана икӗ авӑрлӑ тӑваҫҫӗ. Вӑл авӑрсем муклашкан икӗ йенӗнђе те пулмалла.




15-мӗш карттин.



16-мӗш карттин.

Канат йавмалли муклашка —ӑрасна: аршӑн тӑршшӗ, вершук ҫурӑ хулӑмӗш хурӑн хӑмине варринђен пилӗк шӑтӑклӑ туса (16 мӗш карт.) вӗҫӗсене ђутламалла. Шӑтӑкӗсене, канат пӑйавӗсем ҫӑмӑллӑнах шума ђылай пысӑк шӑтармалла. Хӑман икӗ вӗҫне авӑр пекки тумалла.

*Хӳресем* темиҫе тӗслӗ. Килкепе-вӗрен йавма 7-мӗш карттинккӑра кӑтартнӑ кӑлтӑрмађран тунӑ хӳрех йурат̆. Анђах, вӑл кӑлтӑрмађӑн кӑшт кӑна ҫӑмӑлтарах (пӗђӗкрех) пулмалла тата хыҫӗнђи йӗттӗрне, кантра тирсе тыткалама ункӑллӑ тумалла (17-мӗш карт.). Ҫывӑхра пулӑшма йерҫекен ҫын пулмасан, ҫунашкаллӑ хӳре кирлӗ (17-мӗш карт.). Ӑна вырӑсла „медведка“ теҫҫӗ, ђӑвашсем упа лаппи теҫҫӗ. Хулӑм хӑма ҫине стуйккӑ лартаҫҫӗ. Стуйккӑ виттӗр тимӗртен, йе хурӑнтанах тунӑ ҫеккӗл (ђавса) тиреҫҫӗ. Кантра, йе килкепе йавнӑ



17-мӗш а) карттин.



17-мӗш б) карттин.

ђухне ҫунашки (лаппи) ҫине йӑвӑр ђул хураҫҫӗ, йавас килкепен пӗр вӗҫне ҫеккӗлтен (ђавсаран) ҫаклатаҫҫӗ. Вара, сӗмсем пӗтӗрӗнсе килкепе кӗскелнӗ майӗпе упа лаппи те, кирлӗ таран хӑйех шуса пырат̆.

Кун вырӑнне тата отвес тейекен хатӗр пулма пултарать. Отвес та икӗ тӗслӗ пулать: Йавнӑ ђухне сахал кӗскелекен тавар вађђи пӗђӗк отвес, шултӑра тавар йавма—вӑрӑм, йе пысӑк отвес.



18-мӗш картти.

Пӗђӗк отвеса çапла тумалла. Аршӑн çурӑ тӑршшӗ йупана, çӳлти вӗçне шулаплӑ шӑлтӑрма кӗртсе лартса, çӗре ђавса лартмалла. Шӑлтӑрми çине, пӗр вӗçне, йавакан тавара туртса тӑма пултаракан тараса пуканӗ (кирӗ), йе ђул, тепӗр вӗçне тӑваткал кӗтеслӗ тимӗр ункӑран, çавӑрӑнса тӑракан çеккӗл çыхса, çирӗп кантра хумалла. Кантра вӗçне çыхнӑ пуканӗ (кирӗ), йе ђулӗ йупана перӗнмесӗр сывлӑшрах çакӑнса тӑтӑр тесен, йупа вӗçне вырӑнаçтарнӑ шӑлтӑрмана йупинђен пысӑкрах тумалла. Çапла тусан çеç кирӗ йавакан килкепене кирлӗ таран вӑйлӑ туртса карӑнтарса тӑма пултарать (18-мӗш карт.).

Пысӑк отвеса ак ҫапла тӑваҫҫӗ: Ҫын ҫӳллӗш йупа ҫине урлӑ кашта хурса, йупине ҫӗре ђавса лартаҫҫӗ (19-мӗш карттин.) Йупан ҫурринђен



19-мӗш карттин.

шăлтăрма (в) çапса лартаççĕ. Урлă кашта çине те çакăнса тăракан шăлтăрма (б) çакса лартаççĕ. Çак шăлтăрмасем виттĕр, вара, отвес кантрине тирсе хураççĕ. Кантрин пĕр вĕçне урлă кашта пуçĕнђен, тепĕр вĕçне круђђукăн (б) ункинђен çыхаççĕ Йавакан килкепене отвесĕ вăйлă тытса пытăр тесе, отвес кантрине круђђуклă шăлтăрма (е) çине ђул çакса усăнтараççĕ (карăнтараççĕ).

Канат таврашне йавнă ђухне отвес вырăнне çара çуна лартма йурат. Ăна çапла тăваççĕ. Çуна пуçне канат хӳрине çирĕп çыхса хураççĕ. Çуни çăмăл пулсан ун çине ђулсем, йе тата урăх йăвăр йапаласем хурса тултараççĕ. Канат хӳрине пĕтĕрсе пыма çуна çине пĕр çын тăратаççĕ.

*Канат йавмалли станук.* Канат йавмалли ђи йӳнĕ хатĕр—ђăвашсем аршăн тăршшĕ ђăмăр тимĕре виç куклеклĕ аваççĕ (20-мĕш карт.) Куклетнĕ тимĕрĕн пĕр вĕçне çеккĕллĕ тумалла, тепĕр вĕçне йака, ђăп-ђăмăр йăвăç хăвăлĕ лартса, авăр тумалла. Ђавсан круђђуклă куклекĕ çумне кайккă кĕртсе лартмалла. Вара çав куклеклĕ тимĕр ђавсана икĕ аршăн тăршшĕ, хулăмĕшĕ икĕ вершука йахăн, пĕр йенђен кăшт ђутланă, хунав йуман кашта çине, шăтăкласа, тиреççĕ. Ку кашта çинђе пĕтĕмпе тăват ђавса пулмалла. Вĕсем пĕр-пĕринђен пĕр пекрех



20-мĕш карттин.

(аври куклекĕ тăршшине кура) пулмалла. Ђавсасене тирнĕ кашта шăтăкĕсем тĕлне, ик йенђен те тимĕр шина шăтарса çапмалла.

Канат йавмалли хŭрене те çак калăплă тимĕр ђавсаранах тунă. Анђах, хŭрен каштийĕ кăшт çеç çăмăлрах.

Каната пĕтĕрнĕ ђухне ђавсасене, вара, йе икĕ йăвăç хушшине, йе тата калинкка йуписем çумне çыхаççĕ; хŭрине çара çуна пуçне çыхаççĕ.



21-мĕш а) карттин.

Хаклăрах тăракан станукăн кĕлетки çапла (21-мĕш карт.). Тăваткал, икĕ тимĕр питлĕх (с,в) илеççĕ. Вĕсен йенĕсем пĕрер аршăн пулмалла. Питлĕхсен 4 кĕтессине те шăтарса тимĕр шайпăсем (а) винттăласах (е) лартаççĕ. Питлĕхсен ђи варринђе шăтăк пулмалла. Çав шăтăксенђен шеçтĕрнеклĕ пысăк урапа тирсе хунă. Урапи—тимĕр валлă (21/н-мĕш карт. çинђе урапине л саспаллипе, валне с саспаллисемпе кăтартнă). Ку урапан

шеçтĕрнекĕсем çумне, паљссасемпе перĕнтерсе тăват кĕтессине щăллă тăват кăлтăрмађ лартнă (д,һ,k,i). Шăллă кăлтăрмађсен вĕçĕсем станукăн умнелле вăрăмраххăн тухаççĕ, тата винттăллă. Çав винттăсем çине круђђуксем винттăласа лартнă. Круђђуксем çине хуран çеккĕлĕ (К) ункă çакнă. Сĕме, вара, çак ункăсенђен сĕмлемелле. Кăлтăрмађсен, тата шеçтĕрнеллĕ урапин та валĕкĕсене станук хыçнелле тăваткал кĕтеслĕ туса, кăларнă ăна çапла, йавнă ђухне, авăр тăхăнтартса çавăрма тунă.



21-мĕш н) карттин.

Станука тимĕр полттăсемпе „А“ саспаллипе кăтартнă каштасем çумне çыпăçтарнă.

Ку станук канат йавма çеç мар, сĕм сĕмлеме те йурăхлă. Канат йавнă ђухне (тата вĕрен-пăйав йавнă ђухне те) станук аврине пĕђĕк шеçтĕрнекĕн валĕ çине тăхăнтарса çавăрмалла, мĕншĕн тесен, çапла пĕђĕк шеçтĕрнек валĕнђен çавăрсан, станук вăй кăлараррах çавăрăнать. Сĕм сĕмлемелле пулсан, станука хăвăртрах çавăрмалла, çавăнпа та станук

аврине пысăк шеçтĕрнекĕн (махховикăн) валĕ çине тăхăнтарса çавăрмалла.

## Пĕђђен-иккĕн ĕçлемелли хатĕрсем.

Ку таранђђен кăтартнă хатĕрсене тума кăшт та пулин вăй кирлĕ. Вĕсене, килкепе-канат ĕçĕпе йатарласах хăтланас текенсем çеç туйанма п̧лтараççĕ. Ахаљ те, тата, вăл хатĕрсемпе ĕçлеме ĕçлекенсем йышлăн кирлĕ. Çак хатĕрсем пур. Вĕсене тума та çăмăл, анђах вĕсемпе ĕçлесех çирĕп, сăнлă тавар йавма пулĕ, темелли çук. Вăл хатĕрсем çаксем: сĕм купђашки, хăйђупан, ђавса. Ку хатĕрсенђен иккĕшĕ —сĕм купђашкипе хăйђупан—сĕм сĕмленĕ çĕрте кирлĕ, ђавсийĕпе сĕмсенђен килкепе-пăйав йаваççĕ.




22-мĕш карттин.

*Сĕм купђашкипе* пўртре ларсах сĕм йаваççĕ (ирсĕр çантаlăкра, йе тулта, кун каçађђенех ура çинђе тапăртатма хал çук ватă-вĕтĕсем). Ăна тума çăмăл. Тăвата хăма татăкĕсенђен тăрăхларах (22-мĕш карт.) рамккă тăваççĕ (п). Вăл рамккăна урлă шăтараççĕ те (карттин çинђе А саспаллипе кăтартнă пек), тепĕр йăвăç татăкне тĕнĕл пек шĕвĕртсе (*а*), авăрлă

(в) туса ҫаван ҫине тăхăнтартса хураҫҫĕ. Тухса ÿкесрен тĕнĕл вĕҫне пăта тиреҫҫĕ. Йавма хатĕрленĕ сÿс сĕтел хĕррине кирпĕҫпе пусса хураҫҫĕ те, пĕр пайракне ҫул айĕнҫен ҫăсса кăларса купҫашка рамкки ҫумне пĕтĕрсе ҫыхаҫҫĕ. Унтан сылтăм алпа купҫашкана ҫавăрма тапратаҫҫĕ, сулахаййипе сÿсе тургса майлаштармалла. Ҫапла пĕр касăк сĕме пĕтĕрсе ҫитерсен, ăна купҫашка рамкки ҫине сырса хураҫҫĕ те каллех, малалла сĕмлеме тапратаҫҫĕ. Купҫашки тулсан, сĕме сÿтсе ҫăмха туса хумалла.

*Хăйҫупанпа* та пÿртрех сĕм тума йурат. Вăл та пĕҫҫен ĕҫлекенĕн хатĕрĕ. Анҫах, хăйҫупанпа вăрăм, ҫинҫе сĕмсем йавма хĕн, мĕншĕн тесен ҫинҫе сĕм хăйҫупана кустарма ҫĕнеймест. Вăл, пуринҫен ытла, таҫка кантрасем




Умĕнҫен пăхсан.




Айакран пăхсан.

23-мĕш карттин.

пĕтĕрме, йе сĕмсене пĕрлештерсе шнур йавма ҫеҫ усăллă. Хăйҫупакан кĕлетки ҫапла (23-мĕш карт.):

ытлашши пысăк мар куса-тăран урапана (А) кĕпђек шăтăкне пĕђĕклетсе ĕшлепкеллĕ шертешник çине тăхăнтартса лартмалла. Шертешникĕн пĕр вĕçне шĕвĕртмелле те винттă кастарса (к) пĕр-пĕр йăвăç татăкĕ çине (В, Е), урапана айалалла усса, пăрса кĕртмелле. Урапин кĕпђекĕ пуçне пĕр-пĕринђен пĕр-пекрехрен виçĕ круђђук (*а*, *и*, *в*) çапса лартмалла. Йаланах, вара, çак круђђуксенђен пĕрринђен сĕме çаклатса ĕçлемелле. Урапа çăмăл ђуптăр тесе, кĕпђек ăшне пĕрмайах тикĕтлесе тăмалла.

Йавмалли сӳсе пĕтĕрсе урапан ђи айалти круђђукĕнђен (в) çаклатмалла. Унтан урапана тукунĕнђен кăшт сулса сылтăмалла çавăрса йамалла. Çав вăхăтрах сĕме карăнтарарах туртмалла. Çапла туртнă пирки *в* круђђук кăшт çавăрăнса малтан *и* круђђук вырăнне хăпарать. Вара, сĕме карăнтарма пăрахмалла та урапа хăй вăйпе сулăнса кайнă пирки в круђђук каллех айалалла анать. Вăл айала анса çитсенех сĕме каллех карăнтарса туртмалла, круђђук çӳле хăпарса кайсан сĕме каллех пушатмалла. Çапла сĕме пĕр хисеплĕ йе карăнтарса, йе пушатса пынă пирки урапа хăйех çавăрăнса тăрать те, сĕм пĕтĕрĕнсе пырать.




24-мĕш карттин.

*Ђавсапа*, пĕтĕрсе хатĕрленĕ сĕмсенђен, килкепе йаваççĕ. Çирĕп хурăнтан, йе çирĕкрен, çӳллĕш вершук çурă, йе 2 вершук (а), хулăмăшĕ 3/8 вершук ђавса тăваççĕ (24-мĕш карт.). Ђавсан икĕ

вĕçне те йап-йака, ђăп-ђăмăр вартаса пĕр вĕçне, тата, сĕм çаклатмалли çеккĕл (В) картаççĕ. Унтан икĕ хăма илеççĕ (25-мĕш карт. вăл хăмасене а-па в саспаллисемпе кăтартнă); а саспаллипе кăтартнă хăмин алăк сарлакăшĕнђен вăрăмрах пулмалла,




25-мĕш карттин.

мĕншĕн тесен ĕçленĕ ђухне вăл хăмана алăк йанаххисем çумне çапса лартмалла пулаť (карттин çинђе алăк йанаххисеме А саспаллипе кăтартнă). Тепĕр хăмине кĕскерех тумалла, икĕ вĕçне алсемпе тыткалама çавăрнăçлă вартаса çўхетмелле. Икĕ хăмине те виçшер шăтăклă туса, шăтăксем виттĕр виçĕ ђавса кĕртсе вырăнаçтараççĕ. Хăмисен тулĕ йенђен ђавсасен вĕçĕсене пăта йарса çирĕплетеççĕ. Йавас килкепен сĕмĕсене виç круђђукран та çаклатса, кĕске хăмана çавăрма тапратсан, ђавсасем пур те харăс пĕтĕрĕнме пуçлаççĕ.

Ку хатĕрпе килкепе йавма икĕ çынах пултараççĕ. Пĕри ђавсасене çавăраť, тепĕри муклашка тытса йавăнакан килкепен сĕмĕсене ĕретлĕ пĕтĕрĕнме пулăшаť. Килкепе хўрине йе упа лаппи (17-мĕш карт.), йе отвес çеккĕлĕнђен çаклатмалла.

## III. КАНАТ-КИЛКЕПЕ ĔÇĔ.

Канат-килкепене хапрăкра-машшинсемпе те, йе тата кустарлă—ал вĕççĕн те йавма пулаť. Хапрăксенђе килкепе-каната йавма пур çĕрте те арăш-пирĕш машшинсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хакла тăнă пирки вĕсене кашни ĕçлес тейекенех тыткалама пултараймасť. Çавăнпа та епир, ку таранђђен йўнĕрех, пурте тыткалама вăй çитерне хатĕрсене кăтартрăмăр. Малалла çав хатĕрсемпе килкепе-каната йепле йавмаллине каласа парăпăр.

Канат-килкепе йавас ĕçĕн йĕрки çапла: малтан сўсе с и л л е с е (тылласа) т у р а м а л л а (шăртламалла), унтан вăл сўсрен с ĕ м (çип) п ĕ т ĕ р м е л л е, тин, вара, вăл сĕмсенђен, шнур йавса, шнуртан п ă й а в туса, к а н а т н е йавмалла.

Канат йавниньђен килкепе, йе ахаљ кантра йавасси пĕртте уйăрăлса тăмасť. Каната сўтсе пăхсан, ăна йепле йавнине курма çăмăл: иккен, сĕмсенђен (в) шнур йавнă, шнурсенђен (б) пăйав (кантра) тунă, кантрасенђен (а) канатне (А) йавнă (26-мĕш карттин).

Канат-килкепене йавнă ђухне çакна астумалла: сўс хĕлхемĕсене ытлшши ђăнкă (кăрăс) пĕтĕрсен вĕсем муртакланаççĕ. Çавăнпа, сĕм сĕмленĕ ђухне

т̆е сёмсенђен шнур, йе кантра йавнă ђухне те вё-сене кирлĕ таранран ытлашши пĕтĕрме йурамаст̆. Сĕмпе сĕме те пĕр пекрех пĕтĕрме тăрăшмалла. Пĕр сĕмне сўрĕкрех, те-пĕрне хытăрах пĕтĕрсен те килкепе-канат çирĕп пулмаст̆: сĕмсен, кан-трасен пурин те пĕр пек-рех пĕтĕрĕннĕ пулмалла. Хут̆ те мĕнле çирĕп сўс-рен йавсан та каната йавса пĕтериђђен вăл 40 прођђăна йахăн хăйĕн çирĕппĕшне çухатат̆. Та-та, вăрăм сўсрен йавнă сĕме, кĕске, лăнђашкал-лă, сўсрен йавнă сĕмрен сўрĕкрех йавмалла.



26-мĕш карттин.

Кив канат калăппипе йавакан каната киввин-ђен тађкарах (пысăк-рах), тата хытăрах пĕ-тĕрсе йавмалла, мĕншĕн т̦еç̦ен, вăл кивелнĕ майĕпе сўрĕкленсе, çинђелсе пырат̆.

*Сўсе тыллаçа шăртлаççи* çинђен епир малта каланăђђĕ. Ăна, сўсрен кантăр шăммисене, тата урăх, сўс сăнне пăсакан, йапаласене уйăрма тăваççĕ. Сўс мĕн ђул таса, йака, çавăн ђухлĕ йаваç тавар л̦айăхрах, хаклăрах пулат̆,

*Сĕм сĕмлесси.* Сĕме кустарсем нумайĕшĕ ăрамра (ирĕкре) сĕмлеççĕ. Анђах, ирĕкре, йĕпе-сапара ĕçлени тавар тĕсне те пăсаť, тавар та çирĕп пулмасť. Сĕм хўтĕре сĕмленине нимĕн те çитмест.

Çавăнпа, вăйлăрах ĕçлекенсем сĕм-сĕмлеме йĕтем тăваççĕ. Йĕтем тăршшийĕ килкепе-вĕрен валђи 30 ђалăшран 60 ђалăша çитеђђен пулмалла, канат тавраше валђи—вăрăмрах. Ăна тăршшипех витсе тăваççĕ. Йĕтемĕн пĕр вĕçне ђăкăр лартаççĕ, тепĕр вĕçĕнђе отвес пулаť.

Анђах, çав тери вăрăм йĕтеме витсе тума вăй çитерме хĕн, пуринђен ытла, килкепе-вĕрене йерçнĕ вăхăтра кăна йавса усă курма тăрăшакансемшĕн ку тăкак кирлĕ мар. Çавăнпа, ђăкăрне çеç лупасăн (ампарайĕн) пĕр вĕçне лартса, сĕмне лупас тăрăх сĕмлемелле тăваççĕ. Лупас айĕнђен тухакан сĕм вĕçне, вара, витмелле тивет. Çитменнине, пирĕн ђăваш килхушшине витсе тумасť. Унăн ампарайĕ те килхушшине урлă. Ђăвашăн килђкепе-вĕрене ирĕксĕрех ăрамра йавмалла пулаť. Кун пек пулсан сĕмсене уйартарах çанталăкра çеç сĕмлеме йураť.

Сĕме çапла сĕмлемелле: силлесе йакатнă сўс çурăмне кантра, йе тăлă урлă хурса пилĕке çыхмалла Сĕм тађкăшĕ пулас сўс пайракне пĕтĕрсе ђăкăр круђђукĕсенђен çаклатса, ђăкăрне çавăрмалла. Сĕм сĕмленнĕ майĕпе ĕçлекенĕн кутăн ђакса, çылтăм аллипе сўс пайракĕсене майласа пымалла,

Сулахай ывăç тупанĕпе сĕме çирĕп тытса, сўс вырăнсăр пĕтĕрĕнсе кайасран пăђăртаса пымалла. Сĕм пĕр пек пулса пытăр тесе, тата вăл йака пултăр тесе, сулахай алла пўрнесĕр сăран алса тăхăнмалла. Алса тăхăнни тата, ывăç тупанне те шăрпăк кĕрсе суранланма памасť. Йавакан сĕм пĕр пек, таварăн çирĕпĕшне пăсмасăр, пĕтĕрĕнсе (йавăнса) пытăр тесен, ђăкăр урапине кайалла ђакса пыраканăн утамĕсене кура, вăхăтлă çавăрса тăмалла. Сĕмсене кирек мĕнле тавар вађђи те пурне те пĕр пекрех тума хăтланмалла (сĕмпе сĕмĕн пĕр пек пулмалла). Уйрăм илнĕ сĕмĕн те хăш тĕлте тађка, хăш тĕлте тата çинђе пулмалла мар. Сĕмĕн тађкăшне пĕр пек тума пултăр тесе, каšни таварах, йавма тытăниђђен, малтан сўсне виçсе (турттарса) пăхмалла.

Анђах, лайăх тавар йавасси, пуринђен ытла, ку ĕçе тыткаласа курниђен те нумай килет: пĕре тытсах лайăх тавар йавса хурăп, темелли çук ĕнтĕ.

Йавнă ђухне сĕм çĕрĕ перĕнсе çўпĕленесрен, йе пĕр-пĕркнпе пĕтĕрĕнсе кĕресрен, ăна 5—6 ђалăшран лартса пынă к ĕ р е п л е с е м çине хурса пымалла (12—13 карт.). Канатсем йавнă ђухне, сĕмсем йышлă кирлĕ пирки, вĕсене пĕре тытăнсах пĕтĕрсе çитерейес çук пулсан, сĕмсене купђашкасем çине сырса хураççĕ (14 карт.).

*Сĕмсене сăмхалаласси.* Йĕпе-сапара, йе нўрĕ çĕрте тыткаламалли канатсене, йĕпенсе ытла ђас çĕрсе кайасран вĕретнĕ сăмалапа та тикĕтпе сăмалалаççĕ. Анђах сăмалалассине, йавса пĕтернĕ каната тин

сăмалалама тытăнсан, сăмала каната виттĕр çапмă пултарайман пирки, канатне мар, кашни сĕмнех сăмалалаççĕ. Çапла, сăмалаланă сĕмсенђен йавнă канат çеç шывра тыткаласан та ђасах çĕрмест.

Сăмалалас сĕмсене купђашка çине сырмаççĕ. Канатăн пĕр шнурне çитмеллех сĕм йавса пĕтерсен, вĕсене кĕреплесем çинђен илсе кăшт кăна пĕрле пĕтĕрĕнтерсе йаваççĕ. Вара ăна пĕр вĕçĕнђен тапратса тепĕр вĕçне çитеђђенех вĕретнĕ сăмала хуранне ђиксе тухаççĕ. Сăмалаланă ђухне, сăмалине сивĕнме пама йурамасť. Шнура сăмала хуранĕ ăшĕнђен кăларсан ытлашши сыраннă сăмалине силлесе тăкмалла. Унтан шнура каллех сÿтеççĕ те кашни сĕмнех уйрăмăн-уйрăмăн тытса тура пек тунă хăма шăлĕсем виттер (27-мĕш карт.) сăтăрса кăлараççĕ. Çапла тунипе сĕмсем те виттĕртерех сăмаланаççĕ, сĕмсене ытлашши сыраннă сăмала та пăђăртанса тухаť. Сăмалалă сĕмсем кушкăнса çитсен вĕсенђен, сăмалаламан сĕмсене йавнă пекех, кайран канат йавмалли шнур пĕтĕрсе хураççĕ.



27-мĕш картťин.

*Шнур пĕтĕресси.* Каната кайакан шнура йавма та, тата уйрăмăн пасара кăлармалли кантри-пăйавсене те пĕр хатĕрсемпех йаваççĕ. Пĕр сĕмсене уйăрса майлаштарса пыракан муклашка çеç ăрасна. Икĕ сĕмреп йавмалли кантрана ахаљ патакпах

уйăрса пыраççĕ, виç-тăват сĕмрен пĕтĕрекен таварсене йури тунă муклашкапа уйăраççĕ (15-мĕш карт). Канат йавнă çĕрте çак муклашка та йурат (ăна пысăкрах тунă пулсан), анђах, канат йавнă ђухне 16-мĕш карт. кăтартнă муклашка çавăрнăçуллăрах. 3,6,9 сĕмрен йавакан кантра-пайава сĕм сĕмлемелли виç круђђуклă ђăкăрпах йавма йурат, йышлăрах сĕмлисене шултăра тавар йавмалли станук çинђе йаваççĕ, мĕншĕн тесен йышлăрах сĕмлĕ тавара шеçтĕрнеклĕ стануксăр çĕнме хĕн.

Канат шнурне йышлă сĕмсенђен йавас пулсан, сĕмсене пĕр пеккĕн иккĕ, виççĕ, йе тăватă пайа уйăрмалла. Кашни шнура кĕрекен сĕмсен шуђĕ 2,3,4,5,6,8,12 тата малалла та çакăн пекех пулмалла. Çапла пайланă сĕмсене пĕр вĕçĕпе ђăкăрăн 3, йе 4 круђђукĕнђен те çаклатмалла, тепĕр вĕçĕпе пурне те отвес круђђукĕнђен. Унтан ђăкăра сĕм пĕтĕрĕнђĕкне хирĕç, малтан вăрахăн, унтан хăвăрт çавăрса пайракланса çаклатнă сĕмсене пĕрлештереççĕ. Отвес круђђукне ку вăхăтра, ђăкăра ђармасăрах, 2—3 хут, сĕмсене карăнтарса, кайалла туртса лартмалла. Çапла тусан пĕтĕрĕнекен сĕмсем çирĕпрех вырăнаçаççĕ. Ахаљ те тата, сĕмсене пĕтĕрсе пĕтĕçтернĕ ђухне отвес хўрине пĕрмайах çирĕп, карăнтарах туртса тăмасан, шнур кантраллă пăра пек винттăллă пулмаст.

Сĕмсен пĕр-пĕринпе лайăх, майлă пĕтĕрĕнсе çитсен ђăкăра ђарса, шнурсене вăйлăн туртса ђăсса отвес круђђукне кайалла ђакармалла. Унтан

пушăтран йавса тунă ăшкутпа шнурсене ыталаса илсе кашнинех уйрăмăн, ăшкута кайалла-малалла шутарса, сÿс шăммисенђен тасатмалла. Кунăн хыççĕн шнурсене йĕпетнĕ тăла-варрипе йакатмалла*).

Йакатса пĕтерсен отвес патĕнђен шнурсем хушшине муклашка тытса ђăкăра каллех хăвăрт çаварма тапратмалла. Муклашкине шнурсем хушшине шĕвĕр вĕçне отвес йенелле туса ђикмелле. Шнурсене муклашкан турушкисемпе шутараççĕ. Шнурсем пĕтĕрĕнсе пынипе муклашка отвесран тапратса ђăкăр патнелле шума тапратаť. Вара ăна, йавăнакан шнурсем йĕркерен сиксе ан тухђăр тесе, вăхăтлă çирĕп тытса кăна пымалла. Муклашка ђăкăр патне пырса çитсен, шнурăн вĕçĕсене пур круђђуксенђен те вĕçерсе пĕр круђђукĕ çине çаклатса ђăкăра, шнурсен вĕçĕсем пĕрлешсе пĕтĕрĕнсе çитиђђенех, тепĕр майлă (кайалла) çавăрмалла. Ку вăхăтра отвес круђђукне çавăрăнма памасăр тытса тăмалла. (Отвес круђђукне, йавакан тавара муклашкасăр пĕтĕрнĕ ђухне, кирек хăçан та çавăрăнма памалла мар, мĕншĕн тесен апла тусан тавар пĕтĕрĕнсе хытаймасť). Йавса пĕтерсен пăйава кайалла туртса ђăсмалла.

Тавара хытăрах тăвас тесен муклашкана ђăнкăрах тытса пымалла.

---

* Хăш хăш кустарсем килкене-вĕренсене купăста çеçкипе туртса симĕслетеççĕ. Çапла тусан, пађар сÿсреп йавнă килкене-вĕренех симĕс, çирĕп сÿс тĕсĕ кĕрет. Анђах, улталани—йата çĕртет. Çавăна хвађшă тума ырă мар.

*Каната йавасси.* Хатёрленĕ шнурсенҫен, малтан пăйавсем йаваҫҫĕ, пăйавсенҫен тин, вара,—канат. Пăйавсемпе каната шнур йавнă ҫухнехи йĕркепех йавмалла. Анҫах, каната йавнă ҫухне муклашкана ўкерҫĕк ҫинҫе (28-мĕш карт.) кăтартнă урапаллă станук ҫумне ҫыхса лартмалла Карттинкă ҫинҫе кăтартнă муклашка вырăнне 16-мĕщ карттинккăри муклашкана ҫыхмалла. Станукĕ ытлашши хăвăрт шăвасран ăна тытса пымалла, тата ўреҫисем ҫине ҫулсем хумалла. Отвес вырăнне ҫуна лартса йамалла.



28-мĕш карттин.

Каната кайакаан пăйавсене ытлашши ҫăнкă (ҫирĕп) пĕтĕрсе хатĕрленĕ пулсан, каната виҫĕ пăйавран ҫеҫ йавсан та, хăвăллă пулать. Ҫавăнпа каната ваҫҫи хатĕрленĕ пайавсене ытлашши ҫăнкă пĕтĕрме йурамасть, кăшт сўрĕкрех пĕтĕрмелле. Вара, канат йавнă ҫухне пăйавсем 29-мĕш ўкерҫĕкре кăтартнă пек лапҫăнса, пĕр-пĕрин ҫумне кирлĕ таран, лайăх ҫыпҫăнаҫҫĕ.



29-мĕш карттин.

Каната виҫĕ пăйавран та йаваҫҫĕ, анҫах, тăватă пăйавран йавнă канат ҫирĕпрех, тĕреклĕрех. Ҫавăнпа,

ка́ната, ђас-ђасах тăвата пăйавран йаваççĕ (30-мĕш карт.). Тăвата пăйавран йавнă канат хăвăллă пулатех. Хăвăллă канат ђасрах çĕрет, тата ђăсăлнă-çемĕн ђăсăлса çинђелсе, кайат̆. Хăвăл ан пултăр тесен, канат ăшне, хăвăлтан кăшт пысăкрах йавса тунă пăйав кĕртсе хăвармалла. Ытлашши ђăнкă (хытă) йавнă пăйав хурсан каната тыткалама хытă, çавăнпа хăвăла йамалла пăйавăн сўрĕкрех пулмалла. Тата хăвăла йамалли пăйава кăшт лăнђашкаллăрах сўсрен йавсан та йурат̆; уншăн канатăн çирĕппĕшĕ пĕрт те ђакмаст̆.



30-мĕш картт.н.

Муклашкаллă станук ђăкăрăн круђђукĕсем (ђавсисем) патне çитсе тăрсан, канатăн пăйавĕсене те пĕр круђђук çине çаклатса, ђăкăра (ђавсана) кайалла çавăрмалла. Çав вăхăтрах канат хўрине (çуна çинђе ларса) çавăрăннине хирĕç çавăрса тăмалла. Кирлĕ таран пĕтĕрĕнтерсе çитерсен, ђăкăрпа хўрине ђарса каната туртса ђăсма тăрăшмалла (ђăсăлнă таран).

Каната, йавса пĕтерсен, ни ăшкутпа, ни йĕпетнĕ тăлаваррипе туртмаççĕ (усси çук, тата хĕн), мĕншĕн тесен, канатăн шнурĕсене ђылай ăшкутпа та, тăла-варрипе те, йакатнă.

*Килкепе-вĕрене йавасси.* Хресђен хуçайствинђе тыткалакан килкепене икĕ кĕренкке лайăх сўс

кайат̌ (вӗренпе тевӗрше 5-щер кӗренкке). Килкепене виç сӗмрен йаваççӗ. Кирлӗ тăршшӗ килкепен вăрăмăшӗнђен висӗ хут вăрăм сӗмсем виççӗ йавса çитерсен, вăл сӗмсен отвес патӗнђи вӗçӗсене пӗр-пӗринпе пӗтӗрӗнтерсе кӗртсе сыпаççӗ. Унтан, вăл вӗçне отвес круђђукӗнђен, тепӗр вӗçне ђăкăрăн виç круђђукӗсенђен çаклатса, отвес патӗнђенех сӗмсем хушшине муклашка (15-мӗш карт.) ђикеççӗ. Сӗмсене, муклашка турушкисене шăп виçӗ пайа уйăрса, вырăнаçтараççӗ. Унсăрăн тӗрӗс турушкăра выртман сӗмӗ килкепе йавас кантрана уксакласа (мăкăлтаса) пӗтӗрсе пыма пултарат̌. Муклашкана тӗрӗс (шӗвӗртерех вӗçне отвес круђђукӗ йенелле,— сӗмсем муклашка турушкисем тăрăх шăп виç кӗтеслӗх пулмалла) ђиксен, ђăкăра хăвăрт, сӗмсем йавнă майлах çавăрма тапратмалла. Муклашка, виç сӗмрен пӗр кантра йавса, ђăкăр патне çитсе тăрсан, ăна сӗмсен хушшинђен кăларса, сӗмӗсене пурне те ђăкăрăн айалти круђђукӗ çине çаклатмалла та, ђăкăрне тепӗр майлă çавăрмалла. Отвес круђђукне ку вăхăтра кустармасăр тытса тăмалла. Сӗмсем ђылай пӗтӗрӗнсе кӗрсе кайсан, килкепе йавас кантрана отвеса кайалла туртса ђăсмалла. Унтан, пушăт ăшкутпа кантрана ыталаса илсе, кайалла-малалла турткаласа, сўс шăммисенђен тасатмалла. Вара, кантрана виç хуçăклă хуçлатмалла та, ђăкăр круђђукӗсем тӗлӗнђен татса, вӗçӗсене йăлăллă туса, круђђуксенђен (виççӗшӗнђен те) çаклатмалла.

Пĕр кантраран виççĕ туса çаклатнă кантрасене каллех кăшт пĕтĕрттермелле те туртса ђăснă хыççăн ăшкутпа, ђăкăртан хўре йенелле, пĕр майлă (йўнейлĕ) кашни кантрана уйрăмăн туртса тухмалла. Кунăн хыççăн кантрасене йĕпетнĕ тăла-варрипе йакатмалла. Вара, хўре патне кантрасем хушшине каллех муклашка тытса ђăкăра хăвăрт çавăрмалла.

Кун умĕн, ђăкăр круђђукĕсен ывăсне винттăласа привот килкепине хытармалла. Унсăрăн хăш круђђукин те пулйн кăлтăрмађĕ йавакан килкепен кантрисене çĕнтерейместĕр кайалла шуса çавăрăнма пултарат, килкепене уксаклă (мăккăллĕ) пĕтĕрсе хурат.

Муклашка ђипер ђăкăр кутне çитсе тăрсан кантрасене каллех пурне те пĕр круђђукран çаклатса ђăкăра кайалла пĕтĕреççĕ. Пĕтĕрĕнсе çитсен килкепене кайалла туртса ђăсмалла, унтан тепрер хут ăшкутпа, тата тăла-варрипе (йĕпетмесĕрех) пĕр майлă туртса йакатаççĕ. Килкепине хăлађласа ункă пек ђип-ђипер хутлатаççĕ те, виç çĕртен сўс лăнђашкине пĕтĕрсе, типĕтме, çыхса хураççĕ.

Вĕрене те, çакăн пекех, малтан хăй тăршшинђен виçĕ хут вăрăм йавнă сĕмсенђен тăваççĕ. Çакăн пекех виçĕ хуçăк хуçлатса татаççĕ. Анђах, вĕрене виç сĕмрен çеç йавмаççĕ. Ăна йавма малтан 4—5 сĕм туса хатĕрлеççĕ. Вара вăл сĕмсене пурне те пĕр круђђук çине çаклатса, канатăн шнурне йавнă пекех, муклашкасăр пĕтĕреççĕ. Ђăкăра кун пек ђухне йаланах, сĕмсем пĕтĕрнĕ ђухнехинђен тепĕр майлă çавăрмалла.

## IV. ТЁРЛЁРЕН ШНУРСЕМ ЙАВАССИ.

Кунта епир тёрлёрен шнурсем, йе урăхла каласан, шпакатсем йавасси çинђен калăпăр. Кантра çывăхне пыракан шнурсем çинђен кунта нимĕн те каламастпăр, мĕншĕн тесен, вĕсене килкепе йавнă майлах йаваççĕ, тата, кашни маçтăрах йавма саккас илсен, тавар тĕсне курса, мĕнле йавмаллине хăйех уйăрса илсе, кирлĕ пек йавма пултарать.

Шнурсем (шпакатсем) темиçе тĕслĕ те пулаççĕ. Хăшĕсене, хаклăрах сортлисене, макаçăнсенђе, аптексенђе, йе тата пулă тытмалли хатĕрсене тунă çĕрте çеç тыткалаççĕ. Вĕсене, пуринђен ытла, йĕтĕн сӳсĕнђен çеç тăваççĕ.

Тепĕр, нађартарах, тĕслисене кантăр-пусаранах йаваççĕ. Вĕсем тавар çыхнă çĕре, платниксем, йе ђулăçсем ĕçленĕ çĕре, кайаççĕ, Вĕсемпех, тата, кĕлте çыхма та йурать.

*Хаклăрах йышши шнурсене* виçĕ сорт йаваççĕ: çинђе, вăтам, тата тађкарах (шултăрарах) сорт. Ђи çинђе сортне, лайăх шăртласа, йакатнă йĕтĕн сӳсĕнђен çеç йаваççĕ. Вăтам сорт шнурсене питĕ вĕтĕ тураласа хатĕрленĕ кантăр сӳсĕнђен йаваççĕ. Виççĕмĕш, тађка сорт шнурсене кантăр сӳсĕнђенех

йаваççĕ, анђах ăна ытлашши туралаcа йакатмасан та пырать. Шнура кирек хăçан та и к ĕ сĕмлĕ çеç йаваççĕ. Виçĕ сĕмрен шнурсене сайра, йатарлаcа çеç йаваççĕ, çавăнпа епир икĕ сĕмрен йавнă шнурсем çинђен ытларах каласшăн. Кашни шнурăн тăршшĕ 20, йе 25 ђалăш пулмалла. Ăна ваљђи хатĕрлекен сĕмсене ђăкăрпах сĕмлеççĕ Анђах. ĕç ăнса пытăр тесен, шнурсене йавмалла йĕрке, килкепе-вĕрен йавнă ђухнехинђен кăшт раснарах, урăх стайлăрах. Шнура йавас йĕрке çапла: сĕм сĕмлекен, ăна ђăкăр круђђукĕ патĕнђен 20—25 ђалăш тăршшĕ йавса çитерсен. шăхăрса ђăкăра ђарать. Ђăкăра ђарсанах ăна çавăрса тăраканĕ сĕме круђђукран вĕçерсе йу ри çапнă çеккĕл çине тăхăнтартать. Сĕм сĕмлекенĕ хăй вĕçне йуплĕ патакпа хĕстерсе патакне йе çĕре пусса лартать, йе тата отвес круђђукĕ çине усса хурать. Унтан, каллех ђăкăр патĕнђен тепĕр сĕмне тума тапратать. Ку сĕме те малтанхи сĕм вăрăмĕшех туса çитерсен, вăл каллех шăхăрать. Шăхăрнине илтсен, унăн йулташĕ ђăкăра çавăрма пăрахать те малтанхи сĕмне çеккĕлтен вĕçерсе тепĕр круђђук çине çаклатать, хăй каллех ђăкăра çавăрма тытăнать. Сĕм сĕмлекенĕ ку сĕмĕн вĕçне малтанхи сĕмĕн вĕçĕпе çыпăçтарса пĕтĕрсе кĕртет. Сĕмсем çирĕп пĕтĕçсенех сыпăнсанах), сĕмсене отвес круђђукĕнђен çаклатса ђăкăра хăвăрт çавăрмалла. Сĕм сĕмлекенĕ икĕ сĕм хушшине патак ђикет те, сĕмсенђен шнур пĕтĕрĕнсе пулнă майĕпе ђăкăр патнелле утать. Ђăкăр патне çитсен шнурăникĕ сĕмне

те круђђуксенђен вĕçерсе станук çумĕнђи çеккĕлтен çаклатат̆ те, хăй каллех сĕм тума пуçлат̆. Вăл отвес патне çитсен сĕме каллех йуплĕ патакпа хĕстерет те, ђăкăра ђарса сĕме станук çумĕнђи çеккĕлтен çаклаттарат̆. Хăй малтан йавнă шнура отвес круђђукĕнђен вĕçертсе çавăрăнман хўреллĕ пĕђĕк упа лаппинђен çаклатат̆, шнурăн пулас вăрăмăшĕнђен упа лаппи шуса ан ирттĕр тесе, йĕтем урайне ку тĕлтен шаљђа çапса картлат̆. Çав вăхăтрах унăн ђăкăр кутĕнђи йулташĕ çав шнурăн сĕмĕсене йăллисемпе каллех ђăкăр круђђукĕнђен иккĕшне те пĕр круђђукран, çаклатат̆. Сĕм тăваканĕ пуш круђђукран каллех сĕм тума тапратат̆. Вăл сĕм пĕтĕрсе пынă майĕпе, леш малтан йавнă, шнур та хăй тĕллĕн пĕтĕрĕнсе упа лаппине ђăкăр йенелле сĕтĕрсе пырса, паллă тунă çĕре çитсен ђарăнат̆. Вара вăл шнура кайалла туртса ђăсмалла та, шнура ђăкăр круђђукĕнђен те, упа лаппин çавăрăнман çĕккĕленђен те вĕçерсе вăхăтлăха йури çапса лартнă пăтасенђен çаклатса, малтан каланă йĕркепех, ытти шнурсене йавмалла.

Сĕмсене сĕмленĕ ђухне, кирек хăçан та, тата, акă çакна манмалла мар: сĕмсене пĕрлештерсе пĕтĕрнĕ ђухне тавар, сĕмсем вăрăмĕшенђен нумай кĕскелет. Тата мĕн ђул сĕмсем тађкарах çавăн ђухлĕ тавар та кĕскелет. Çавăнпа, кирек мĕнле тавара йавнă ђухне те сĕмсене таварăн вăрăмăшĕнђен ђылай вăрăмрах виçепе сĕмлемелле, тата вĕсене кирлĕ тађкăшĕнђен те тађкарах тума йурамаст̆.

Шнурсене йавнă ђухне сĕмĕсене те ытлашши куђăркаллă сĕмлеме йурамасť, шнурсене те сӳрекрех пĕтĕрме тăрăшмалла, мĕншĕн тесен, çапла тумасан, шнурсем ытлашши хытă, тыткалама çавăрнăçусăр пулаççĕ, тата сӳсĕ те ытлашши пĕтĕрĕннипе кавсăлса, муртакланса кайаť.

*Виçĕ сĕмлĕ шнура (шпаката)* кантăр-пуса сӳсĕнђенех йаваççĕ. Ăна йавмалли сӳс кăшт пăрахăçраххах та пулма тиркемест. Çавăнпа та унăн сĕмĕсене те, малтан каланинђен хытăрах пĕтĕрĕнтерсе тумалла, тата хăйне те хытăрах (ђăнкăрах) пĕтĕрмелле. Унăн тăршшĕне 10—12 ђалăшран ытла сахал тăваççĕ. Йавассине шпаката, икĕ сĕмлĕ шнура йавнă ђухнехи майпах, тата çав хатĕрсемпех йаваççĕ. Анђах, пур виç сĕмне те пĕр çĕре пĕтĕрнĕ ђухне ахаљ патак вырăнне виç турушкăллă пĕђĕк муклашкапа ĕçлеççĕ. Ăна тата шпакат хытăрах пултăр тесе кайалла тытарах пырса утаççĕ.

*Шнурсене тĕс кĕртесси.* Шнурсене уйрăмăн-уйрăмăн пĕтĕрсе çитерсен, вĕсене сутма йурăхлă тума тытăнаççĕ. Йавса пĕтернӗ шнура карăнтарса ăшкутпа кайалла-малалла туртса йакатаççĕ. Унтан вĕсене вуникшерĕн пĕр çĕре çыхса çĕр каçађђенех шывра тытаççĕ. Ирхине шнурсене шывран кăларса каллех пĕрер-пĕререн карăнтараççĕ те, ăшкутпа каллех кайалла-малалла пăђăртаса туртаççĕ. Кайран, тĕс кĕртме тăла-варрипе йе сăран татăкĕпе пĕр майлă, тавар кирлĕ таран йакалса çуталађђенех,

сăтăраççĕ. Йулашкинђен шнур йакалса, типсе çитет те, ăна ђăмăр йăвăç татăкĕ çине çăмхаласа сыраççĕ.

Тавара пасара кăларма та йуратĭ.

# V. ШНУРСЕНЂЕН ТУНӐ ТАВАР.

## А. Шнур ђӗнне тӑвасси.

### I. Шнур ђӗнӗ ӑçта кайаҭ.

Шнур ђӗнӗ тенкел-пукан тунӑ çӗре, кутлӑх-ӗнерђӗк, тата йӗнерсем тунӑ çӗре кайаҭ. Шнур ђӗнӗнђен тата кутлӑх-йӗвен те тӑваççӗ. Ку тавар каймасҭ темелли çук, мӗншӗн тесен вӑл сӑран ђӗнтен йӳнӗрех пирки, ӑна тыткаларах параççӗ.

Çавӑнпа, шнур ђӗнне тӗртме вӗренни сийен пулас çук.

### II. Шнур ђӗнне тӗртмелли хатӗрсем.



31-мӗш карттин.

Шнур ђӗнне тӗртмелли хатӗрсем йышлӑн мар, тата вӗсене тума çӑмӑл. Вӗсем акӑ çаксем: т ӗ р т м е л л и с т а н у к, ӑ с а тата х ӗ ç.

*Ӑсана (31-мӗш карт.)* вӗр типӗ, йап-йака йӑвӑçран тунӑ. Икӗ пуçне те хурӑçран тунӑ, йап-йака йуплӗ мӑйрака çапса лартнӑ. Мӑйракан йупписем çине вара тӗртмелли çинçе шнура (ураççи) кумса хунӑ.

*Хӗçе* (32-мӗш карт.) те йӑвӑçранах тунӑ. Ӑна тунӑ йӑвӑçӑн çирӗп пулмалла. Хӗçе çӗçӗ

калăппипех тунă, анҫах унăн ҫивĕҫҫĕшĕ мăкарах пулмалла, мĕншĕн тесен, унсăрăн хĕҫ тĕртекен шнурсене касса татма пултарать.



32-мĕш к рттин.

Тĕртмелли станукăн калăпĕ пир тĕртмелли станук йевĕрлех. Икĕ шăлтăрма (в) илсе, вĕсене икĕ, паслă, хăма татăкĕсем ҫине вырăнаҫтарса лартмалла. Хăма татăкĕсене урлă каштапа тытăҫтармалла. Шăлтăрмасем урлă кантра (б йарса вĕҫĕсенҫен икĕ кĕрĕ (а) ҫакмалла. Кĕррисен рамккисене ҫӳхе йăвăҫ хăмасенҫен тунă. Рамккисем урлă хăмисем ҫине пĕрпĕринҫен инҫе те мар е саспаллипе кăтартнă кĕрĕ-ҫиппisem йеркеллĕ карнă. Ҫипсем варринҫе пĕҫĕк тимĕр ҫĕрĕсем (уңкăсем) пулмалла. Вĕсене карттинккă ҫинҫе к саспаллипе кăтартнă. Шăлтăрмасем вырăнаҫтарнă йăвăҫ каштине кантрапа (г) тимĕр ункă (д) виттĕр




33-мĕш карттин.

тирсе маҗҗа каштн çумне çапнă пăтаран çакаççĕ Кĕрĕсен айал йенне *ж* саспаллипе кăтартнă кантра сем çине *з* саспаллипе кăтартнă кантра ункăсем (тăлăсем), тапă пек туса, çыхса йанă. Шнур тĕртнĕ җухне вăл тапăсене ылмаштарса пусса ĕçлемелле. Тĕртмелли кĕрĕ рамккисем варринҗи тимĕр ункăсем виттĕр шнур тирсе куммалла.

## III. Шнур җĕнне тĕртес техниккă.

Шнурсене çапла куммалла: пĕр шнурне илсе пĕрремĕш кĕрĕри к саспаллипе кăтартнă ункă виттĕр тирсе, иккĕмĕш кĕрĕн хĕрринҗи ункăсем хушшипе кăлармалла. Унтан тепĕр шнурне илсе пĕрремĕш кĕрĕн ункисем хушшипе йарса тепĕр кĕрĕн ункийĕ виттĕр тирмелле. Виççĕмĕш шнурне каллех пĕрремĕш кĕрĕн иккĕмĕш ункийĕ виттĕр кăларса тепĕр кĕррин ункисем хушшипе йамалла. Çапла кĕрĕсем тулаҗҗенех шнурсене ылма-тĕлме пĕр кĕрĕн унки виттĕр, теприн çиппнсем хушшипе йарса—шнур пирне куммалла. Шнурсен хўрине куҗҗаласа станук хыçĕнҗи патакран çаклатса лартмалла, тĕртнĕ җĕнне йĕттĕр çине сырса пымалла. Йĕттĕрне йе çтена çумне, йе станук пуçнех вырăнаçтармалла.

Ăса çинҗи шнурăн кумнă шнурсенҗен çинçерех пулмалла.

Тĕртессине пир тĕртнĕ пекех, тапăсене йе сылтăм, йе сулахай урапа пусса, ăсине кумнă шнурсем виттĕр кăларса, тĕртмелле. Каыни 4 пусăмран

(питĕрех тĕртес тесен—кашни икĕ пусăмранах) сганука ђарса ăса шнурне (ураççине) хĕçпе касса хытарса пымалла.

Çапла, шнур ђĕнне тĕртмç ытла та çăмăл.

## Н. Урайне сармалли пăлавиксене сӳсрен çыхасси.

### I Пăлавиксем ваљљи çивĕт йавасси.

Кăђуне кашни ђăвашах пӳрте-çурта тирпейлĕрех пăхса усрама тăрăшаť: пӳртсене шурăлла лартаť, мађђи-урайĕсене саваласа тăваť, кайран пĕрмайах çуса тасатса тăраť (нумайĕшĕ урайсене сăрласа тума та тăрăшаççĕ), пӳртне шпалерсем çапаť. Пӳрт-çурта тирпейсĕр тытакан хĕр-арăма ђăваш „лапатник“ тесе йат параť, таса мар пӳрте „хурал пӳрђĕ“ теççĕ.

Анђах, çуркунне-кĕркунне пӳрт-çурта çăпаталлă ђăвашăн таса тытма хĕн. Тулти пыљђăк çăпатана сырăнса пӳрте кĕрсе тулаť-тулатех! Нимĕн тума аптăраса çивĕђрех ђăваш арăмĕсем урайне улăм сарса тултараççĕ. Анђах, пӳртре улăм пулни вуткăвар тĕлĕшĕнђен те хăрушă, тепĕр ђухне тата улăмĕ те выљђăхсем ваљђи çеç. Хăма сарас—каллех килĕщӳсĕр йапала.

Çакăн пек ђухне урайне сарма сӳсрен çыхса тунă пăлавиксене нимĕн те çитмест. Вĕсене тасалама та аван, тата вĕсем тӳсĕмлĕ: пĕре туйаннă сӳс пăлавик темиçе çула çитеђђенех перет.

Ăна çыхасси те йăвăр йапала мар, çыхмалли хатĕрсене те тума çăмăл. Пăлавиксене çыхма кашни ђипер алă çавăрăнăçуллă çынах пултарать. Пăлавиксем çыхнă çĕрте ђи нађар, лăнђашкаллă сӳс те йурать. Сӳс хăлхи-пăлавиксем ваљђи питех те пăрахăçуллă мар.



34-мĕш картти.

Пăлавиксене çыхнă çĕре сӳс лăнђашкинђен йавнă (пĕтĕрнĕ) шнурсем кирлĕ. Вăл шнурсенђен виç пушăтлă кантра пек (34-мĕш карт.) хуçса, вăрăм çивĕт тумалла. Çивĕтĕн тăршшĕ 40 аршăнран кайа мар пулмалла. Çав тери вăрăм çивĕте пĕр татăксăр йавас тесен, пӳрте тĕпеле те, алăк патне те пĕрĕр çеккĕл çапса лартмалла. Тĕпелтен тапратса алăк патне çивĕтлесе çитерсен, çивĕте алăк патĕнђи çеккĕлтен çаклатса тĕпелелле кутăн ђакма тапратмалла. Тĕпелти çеккĕл патне çитсен çивĕте каллех çеккĕлтен çаклатса, ăна алăк патнелле ђăсса йавса каймалла.

## II. Йавнă çивĕтсенђен пăлавиқ çĕлесси.

Йавнă çивĕтсенђен пăлавиксем çĕлеме тапратиђђен вĕсене тăршшипех пăхса тухса, пур тĕмескеллĕ-муклашкаллă вырăнсене йақатмалла. Унсăрăн

пăлавик пĕр пек тикĕс пулмаст. Пăлавиксем йе вăр çаврашка ђăмăр, йе кăшт çеç ђăмăр, йе тата тăват кĕтеслĕ пулма пултараççĕ. Пăлавиксене çинçе кантрапа çĕлемелле. Çĕленĕ ђухне çĕвви ан палăртăр тесе, çипе çивĕтĕнваррипе кăларма тăрăшмалла. Хулăм пăлавиксене çивĕте хăйаккăн (касмалла) лартса çĕлемелле. Вăр-çаврашка пăлавиксене варринђен çĕлеме тапратса çивĕте кăлтăрмађ пек çавăрса ымалла. Кăшт çеç çаврашка пăлавиксене те варринђенех çĕлеме тапратмалла, анђах çивĕте пĕр тăруках çавăрса каймалла мар: йе кутлă-вĕçлĕ пўклесе, кайран тин тавралла çĕлесе каймалла, йе тата çивĕт вĕçне вăрăмăн йарса пăлавикĕн пуçĕсенђе тин тавралла çĕлемелле. Тăват-кĕтеслĕ пăлавиксене пĕр йенђен çĕлеме тапратаççĕ те, çивĕте пуçлă-вĕçлĕ туса, тепĕр йенне çитеђђенех çĕлесе тухаççĕ. Йулашкинђен, çивĕтсемпех пăлавик тавралла ик-виç хут çавăрса çĕлесе, пăлавика хăнтăрлă (йĕсмеллĕ) тăваççĕ.

## III. Пăлавиксене тĕртсе тăвасси.

Пăлавиксене тĕртсе те тăваççĕ. Вĕсене тĕртмелли стануксем тĕмисçе тĕрлĕ. Анђах, епир кунта кашнийех харпăр-хăй тума пултарнă станукcем çинђен çеç калăпăр.

Тăваткал кĕтеслĕ пысăк йăвăç татăкĕсенђен 10 вершук сарлакăшĕ, 15 вершук тăршшĕ сўрекке йевĕрлĕ раммă тумалла (35-мĕш карт). Сўреккен тăрăхла йăвăççисен пĕр вĕçне шал йенђен паслă

туса, пассенђе ҫӑмӑллӑн щутарса ҫӳретмелле урлӑ йанах кӗртсе лартмалла. Урлӑ йанаха, ӗҫленӗ ђухне кирлӗ тӗлте шӑвайми (хусканми) хытарса лартма, сӳрекке йӑвӑҫҫине пассем тӗлӗнђен ӗређӗпех шӑтарса, шӑтӑкӗсем виттӗр йӑвӑҫ пӑта-



35-мӗш карттин.

икӗ йенђен те, тирмелле. Шӑвакан урлӑ йӑвӑҫ ҫине, сӳреккен пассемсӗр пуҫӗнђи йӑвӑҫ ҫине те пӗр-пӗринђен пӗр вершукран кӑшт ҫеҫ кайарахран вершук тӑршшӗ пӑтасем ҫапса тухмалла. Пӑтисене йе йӑвӑҫранах, йе тата тимӗртен тусан та йурӑ.

Пӑлавика тӗртме тытӑнсан, ҫак станукӑн пассенђи урлӑ йанахне пулас пӑлавикран вӑрӑмрахран сӳрекке ҫинђи шӑтӑксенђен патак тирсе урлӑ йанаха вырӑнаҫтараҫҫӗ. Унтан сӳрекке щӑлӗсем ҫинђе, йавса хатӗрленӗ ҫивӗте куммалла. Кумнӑ ҫивӗтсене, пӗр ҫивӗтне ҫӳлелле, тепӗрне айалалла ылма-

тĕлме йарса хăма татăкĕпе уйăрмалла. Хăма татăкне касмалла (хăйаккăн) тăратсан çивĕтсем пушшех кар! уйăрăлса тăраççĕ. Вĕсен хушшине тепĕр çивĕт илсе пĕр вĕçне виттĕр тирсе, хăма çивĕђĕшпе сÿрекке пуçĕ çумне касса хĕстермелле. Унтан хăмана кăларса каллех кумнă çивĕтсен хушшине, малтан айалта пулнă çивĕтне çÿлелле, çÿлте пулнине айалалла туса первайхи хуçăка хунă çивĕте кайалла (кутăн) кăларса, хăма çивĕђĕшпе первайхи урлă çивĕт çумне çат-çатах сыпăçтармалла. Çапла, пăлавика кумнă çивĕтсем виттĕр, ураççи çивĕте, çăпата хуçнă пек, ылмаштарса пырса тĕртеççĕ. Тĕртнĕ ђухне пăлавика питĕрех тĕртме тăрăшмалла.

Тĕртнĕ çемĕн кум—çивĕђĕсем кĕскелсе (щăршăнса) пынипе, тĕртме йăвăрланса пырать. Çавăнпа урлă йанаха пĕр карт çине кĕскетерех куçарса кумнă çивĕтсене пушатмалла.

Сарлакăшĕ 9 верщук, тăршшĕ 12 вершук пăлавика тĕртме пĕтĕмпе 45 аршăна йахăн çивĕт кĕрет. Çакăн пек пăлавика тĕртсе пĕтерме пĕр çынăн çине тăрсах ĕçлесен те икĕ каç лартмалла пулать.

## IV. Хулăм (тађка) пăлавиксене тĕртесси.

Хулăмрах, тата çирĕпрех тăвас тенĕ пăлавиксен раммине кăшт урăхларах тăваççĕ. Ăна тумалли йăвăç та кăшт çÿхерех пулсан та йурать. Вăл рамăна урлă йанахсăрах тăваççĕ, çавăнпа та вăл урлă йанаха шутарса çÿретмелли пассемсĕрех (36-мĕш карт.).

Çапла тунӑ рамӑн (сӳреккен) икӗ пуçӗнҭи йӑвӑç-
сем çинҭи пӑтасене пӗр-пӗринҭен вершукран кӑшт
çеç инҭерехрен çапаççӗ (кашни $1^1$ в вершукранах).
Кумнӑ çивӗтсем пӑтасенҭен шуса анасран вӗсене



36-мӗш картин

тулалла тайса çапмалла. Хулӑм пӑлавиксен кумкӑҭӗ
(куммалли çивӗтсем) ураççи çивӗтсенҭен çинçерех
пулмалла. Тӗртнӗ çӗрте вӗсем кӑшт çеç палӑрса
тӑмалла.



37-мӗш картин

Тӗртнӗ ҭухне кумнӑ çивӗтсене уйӑрмалли хӗç-
сем иккӗ: пӗри йака, тепри шӑллӑ (37-мӗш карт.).
Иккӗшӗ те вӗсем тӗртекен пӑлавик сарлакӑшӗ

пулмалла. Пĕрин—йака хĕҫин—сарлакăшĕ пĕр вершук, шăллă хĕҫин сарлакăшĕ икĕ вершук, тата кашни вершукранах, вершук тарăнăшĕ картса кăларнă шăлсем пулмалла.

Тĕртме кумнă ҫивĕтсене ҫак шăллă хĕҫпе ҫапла уйăрмалла: пĕр ҫивĕтне хĕҫĕн шăлĕ ҫине, тепĕрне хĕҫ карҕĕ ҫине (шăлсем хушшинҕи лупама) хурса пымалла. Ҫапла икке уйăрнă кумнă ҫивĕтсем виттĕр тепĕр—йака хĕҫпе ураҫҫи ҫивĕтĕн вĕҫне тирсе хумалла. Кумнă ҫивĕтсене шăллă хĕҫпе уйăрнă ҕухне, уйăрмассерен алпа йури йĕркелесе пымалла. Ураҫҫи ҫивĕтĕн кумнă ҫивĕтсене кирек хăҫан та таҕăрах витсе пымалла.

Кумнă ҫивĕтсем виттĕр пĕр-ик ураҫҫи ҫивĕт хрусанах, 38-мĕш карт. ҫинҕе кăтартнă кусара (йăвăҫранах тунă) кумнă ҫивĕтсем хушшине ҕиксе те,



38-мĕш карттин.

тата тул йенҕен те хĕстерсе кусар тӳртĕшĕнҕен вут-сыппипе ҫапса урлă ҫивĕтсене пĕр-пĕринпе ҫирĕп хĕстермелле.

Тĕртнĕ ҕухне пăлавикăн аркисене (хĕррисене) туртăнса кĕрсе кайасран хытă асăрхамалла. Пăлавик хĕррисене пур ҫĕрте те тӳрĕ тума, тата пăлавик

пĕр анлă пултăр тесе, сÿреккен шăлĕсем айăккипе çÿхе тимĕртен тунă ункăсем çапса тухмалла. Вăл ункăсенђен, кумнă пăлавикăн икĕ йенĕпе пÿрне пыршшĕ икĕ тимĕр патак тирмелле (39-мĕш карт.) те тĕртнĕ ђухне урлă çивĕте çак патаксем тавра çавăрса илмелле. Тимĕр патаксене, тĕртес пăлавикăн анлăшне кура тирмелле.



39-мĕш карттин.

Пăлавика тĕртсе пĕтерсен, ăна рамă (сÿрекке) çинђен илсе икĕ айăккинђи тимĕрсене кăларса, вĕсем вырăнне, пĕтĕм пăлавика кăшăлласа кантра, йе çивĕтех тирмелле.

## V. Вăрăм пăлавиксене тĕртесси.

Вăрăм пăлавиксене тĕртме ăрасна станук кирлĕ. Ăна çапла тумалла: тăвата уралла икĕ такан

(40—41-мĕш карт.) туса, вĕсене урлă çапнă шăллă хăмасемпе пĕтĕçтерсе тăратса лартмалла.

Такансен урлă хăмисем икшер ђўређеллĕ (шăтăклă) пулмалла. Çав ђўређесем виттĕр вăрăм хăмасем хурса такансене тўрĕ тăракан тумалла.



40-мĕш карттин.

Вăрăм хăмасене пĕр таканĕ çине хусканми çирĕп тирсе лармалла, тепĕр таканне вăрăм хăмасем тăрăх пăлдвик тăршшĕне кура кайалла-майалла шутарса çўретмелле тумалла. Шуса çўрекен таканĕ хушшине, кумнă çивĕтсене сырса хума, тăвată хăма татăкне хĕреслесе, йĕттĕрĕн икĕ пуçне çапса лартмалла. Хĕреслесен вĕçĕсене пĕр-пĕринпе хăма çапса пĕтĕçтермелле. Пĕр хăмине такансем çинђи

ђухлех шăлсемлĕ тумалла. Çакăн пек тунă кăшкар çине кумнă ђухне çивĕтсен пĕр вĕçне çаклатмалла та, кайран пăлавика тĕртнĕ çемĕн пушатса пымалла.



41-мĕш карттин.

Çак станукпа (41-мĕш карт.) пĕђĕк çуртрах ђылай вăрăм пăлавиксел тĕртме пулаť.

## ÇĔРПŬ УЙЕСĔНЂИ КИВ-УРМАРТА КИЛКЕПЕ-ВĔРЕН ЙАВАКАН КУСТАРСЕМ.

### Килкепе-вĕрен йавас ĕç пуçланса кайни.

Килкепе вĕрен йавас ĕç Кив-Урмарта 1850-мĕш çулсенђе, 70 йе 80 çул авал пуçланнă. Ку ĕçе Кив Урмарăн Виç-Пўрт йатлă кассинђе пуçласа йанă. Ваттисем каланă тăрăх, çак ĕçе пуçласа йаракансем Хĕветĕрпе Ваçли йатлă пиђĕшпе шăллĕ пулнă, халђ вĕсем иккĕш те (Хветĕр Ахванасђ та, Ваçли Ахванасђ та) вилнĕ. Вĕсен хушамађĕ Молăстăв пулнă. Çак тăвансем пит хĕн асаппа, йăвăр ĕç ĕçлесе пурăннă. Çамрăклăха, хăйсен çамрăк ђухнехи вăйне хăйсен йал йышсемпе йута кайса ĕçленĕ çĕрте пĕтерне. Йут çĕре, пуринђен ытла Атăл çине пурлака, кайса ĕçленĕ. Вĕсем 30-35 çула çитиђђен Атăл хĕррипе тавар кимми туртнă. Çав пурлаксем хушшинђе пурăннă ђухне, Атăл çинђе пуринђен ытла кирлĕ йапаласене вĕрен-кантра таврашне хамăрăн хатĕрлес тенĕ шухăш вĕсен пуçне килсе кĕнĕ. Шухăшлана — тунă. Молăстăвсем вĕрен-кантра йавма тытăнаççĕ. Çăмăл алăпа пуçласа йанă пĕђђен-иккĕн (кустарла) тавар хатĕрлес ĕç, Виç-Пўрт йалĕнђе пуçланса кайат. Кив-Урмар

кирлĕ çынсене, кимĕ хуçисене канат-вĕрен тăратма пуçлаť. Малтан, ку ĕç пуçлансан, Кив-Урмарта шултăра канат-вĕрен анђах йавнă, кайарах ку ĕç тепĕр майлă çавăрăнса кайнă,—таврари хресђенсене кирлĕ таварсем анђах ĕçлеме пуçланă: килкепе, кĕлте кўме вĕрен, тевĕщсем, тата ыттине те. Кусене пурне те кантăртан йавнă. Çавăнпа пĕрлех пусаран кутлăхсем, йĕвенсем, пушăсем йавма тытăнаççĕ. Çывăхри пасарсенђе—Кавалта, Çĕрпўре, Шăхасанта, тата ытти çĕрте те пушăсем купи-купипе сутса вырнаçтараççĕ. Вĕрен-кантра йавакансенђен хăшĕ-пĕри тĕрлĕрен йапала хатĕрлес тесе, пулă тытнă çĕрте кирлĕ вĕрен-кантра йаваççĕ, вĕсене Атăл тăрăх пулă тытакансене сутаççĕ. Çак пулă тытмалли хатĕрсене Макçăм Çпритонĕ йавнă. Виç-Пўрт кассинђе пуçланнă ĕç пĕтĕм Кив-Урмара сарăлђĕ, çапах та килкепе-вĕрен йавас ĕç Виç-Пўрт касси çинђех тăраť. Унта ку ĕçе çав Молăстăвсен йăхĕсем ĕçлесе пурăнаççĕ. 25-30 çул ĕлĕкрех Виç-Пўртре ку ĕçе Кавриле Макçăмĕ ĕçленĕ те, хăйпе пĕрле ку ĕçе йалти пур çынна та йертнĕ. Халĕ ĕнтĕ Кавриле Макçăмĕ ватăлса çитнĕ, хăй ĕç тытаймăсť.

Уй-Кассинђе, нумайах пулмасť, ку ĕçе Макçăм Матвипе Ентри Михали пит вăйлă ĕçлетђĕç. Ентри Макçĕмĕ хăй аллипе йавнă вĕрен кантрасене тĕрлĕ выставккăсене халăха кăтартма йанă. Унта ăна лайăх ĕçленĕшĕн укçа, тата мухтаса çырнă хут ђылай панă. Ентри Михали вилни 12 çул

çитет. Макçăм Матвийĕ пит ватăлса кайнă пулин те сайра хутра халĕ те ĕçлекелет. Мерă кассинҫе килкепе вĕрен йавакансенҫен Тенис Çеменпе Йехвим Хветĕрне кăтартас пулаť. Кусем икĕшĕ те килкепе вĕрен йавас ĕçе пит вăйлатса йанăҫҫĕ; ĕçленĕ таварсене Ҫулхулана çитиҫҫен сутма кайнă.

Макар-кассинҫе Потметкă Микулийĕ килкепе вĕрене вăрçăҫҫен хĕлĕн-çăвĕн йаватҫĕ, ĕçлессе хĕлле пўртре ĕçлетҫĕ.

Хаљхи вăхăтра, Молăстăв йăхĕнҫен килкепе вĕрен йавас ĕçе пуринҫен ытларах ак çаксем ĕçлеççĕ: Хĕветĕр Куçми, Кĕркури Ваçли, Кĕмĕллĕ Иванĕ, Макçăм Çпритунĕ. Çаксенҫен пĕрри—Макçăм Çпритунĕ, 44 çула çитиҫҫен Ҫăшламара Çеливанăвсем патĕнҫе ĕçленĕ. Унтан кайран вĕрен-кантра 23 çула йахăн йавса пурăннă. Халĕ ĕнтĕ 67 çула çитнĕ. 1909-мĕш çулта Хусанта пĕтĕм халăх хушшинҫен ҫĕнсе вак промышлăннăç, ăсталăха вĕреннин, йалхуçайствин, шултра промышлĕннăç, пушарпа кĕрешес хатĕрсен выстăвкки пулнă. Унта Макçăм Çпритунĕ пусаран тунă кутлăха хăй пултарулăхне кăтартма йанă. Уншăн ăна финанс министăрĕ хитрелетсе çыртарнă похваљнăй лист панă.

Тата килкепе-вĕрен йавакансенҫен Елкипе кассинҫе Ҫискăнтăв Алексантăрпе Каврилe Макçăмĕн аҫисене асăнас пулаť. Кусенҫен пуçне Мирун Унтри те пĕр вăхăтра килкепе-вĕрен пит вăйлă йавнă, анҫах халĕ ку ĕçе пăрахса сутă тума тытăннă.

## Тавар илекен-сутакан вырӑнсем.

Килкепе-вӗрен йавнӑ çӗрте, паллах ӗнтӗ, сўс кантăр кирлӗ. Урмар патӗнђе те, пӗтӗм Ђӑваш респуплĕкĕпе те сўс-кантӑр сахал акнӑ пирки, çак вӗрен йавакан кустарсем сўс-кантӑра йут çӗртен кўрсе тӑраççӗ. Вӑрçӑђђен кирлӗ сўс-кантӑра Тетӗш уйесӗнђе Шонкутра, Антӑрђӑра илсе тӑнӑ. Хӑшӗ-пӗри Артаттура, Веткӑ кӗпернинђе, тата ытти вырӑнсенђе те илсе тӑнӑ. Хаљхи вӑхӑтра Тетӗш кантунӗнђи Çукейӑвӑра, унсӑр пуçне тата Йалапукра илсе тӑраççӗ.

Хӑйсен таварӗсене çывӑхри Кавал, Çӗрпў, Ишек, Тури-Кӗçнерни, Ђикме, Хуракасси, Нурӑс пасарӗсенђе сутаççӗ.

Хаљхи вӑхӑтра сырйо тупма, тата ӑна кўме кансӗр пирки кустарсем вӗрен-кӑнтра йавма йалсем тӑрӑх саланаççӗ. Йалсем тӑрӑх килкепе вӗрен йавма çуллен 200-250 çын кайат̆. Вӗсем ака пӗтсен кайса ӗçе тухађђен ӗçлесе çўреççӗ. Хӑшӗ çармӑссем патне Красно-Кокшайска, хӑшӗ вырӑс Тӑрӑм йенне, хӑшӗ Йаранскӑ уйесне, хӑшӗ Сӗве кантунне, хӑшӗ тата Ӗпхў кӗпӗрнине çитиђђенех саланаççӗ.

## Кустарсем пурнӑçӗпе укçа-тенкӗ тытӑвӗ.

Кив-Урмар йалӗ çыннисем, çӗр йенђен илсен, ӗлӗкренпех нађар пурӑнаççӗ. Вӗсен виçӗ пусупа та ђун пуçне пӗр теçеттин анђах çӗр тивет. Кив-Ур-

мар халăхĕн çĕрĕ—Ара Çырмин çўллĕ çыранĕсем, тата Услар йатлă сăрт тăрăх пыраť. Пуринђен ытларах çак кайранхи сăрт тăрăх пыраť. Сăрт çинђе çулленех тырă пулмасť. Çĕрĕн тăприне пăхсан —тырă туман хытă тăм хăратсах йараť. Хытă тăм çинђе пулнă çул та теçеттинран 35-45 пăт тырă анђах тухаť. Уйра акса тунă тырă пурăнма çитмест. Çавăнпа та унти халăх ĕлĕкренпех ĕç шыраса йут çĕре кайнă. Урмарта ђукун çул стантси уçăлсан нумайĕшĕ стантсăра тавар тийесе пушатса пăртак укçа тупкалаççĕ. Анђах унта та ĕç пит сахал. Çапла тырă-пулă нађар пулнă пирки, тата ĕçлесе укçа тупма ĕç сахал пирки авалах кунта килкепе-вĕрен йавас ĕç пуçланса кайнă. Ку ĕçрен пуçне халăх урăх ĕç пелмест. Çак ĕçрен çеç халăх тыткаламалăх укçа-тенкĕ тупаť. Авалтанпах килкепе вĕрен йавни Кив-Урмар халăхне пит нумай пулăшнă. Килкепе-вĕренрен халăх усă курни вăрçăђђен пит аван палăрађђĕ. Пĕр вăтам çемйе çулла, виççĕн-тăваттăн ĕçлесен, 100 тенкĕрен пуçла-150 тенке çитиђђен тупăш кураťђĕ. Çулталăкĕпех тăрăшса ĕçлекенсем: Йехвим Хĕветĕрĕ, Кавриле Максăмĕ пеккисем Çĕрпў, йе Ишек йармăрккисене пĕр кайнă ђух 3-4 лав хăйсем йавса тунă килкепе-вĕрен илсе кайса сутаťђĕç. Хресђенсем хăйсем калană тăрăх килкепе-вĕрен йавса сутсан тенкĕ пуçне тенкĕ тупăш йулнă. Кустарсен ĕçĕнђен мĕн ђул йулни ак çаксенђен лайăх курăнаť: пĕр пăт сўс илмешкĕн 40 йе 50 пус панă. Пăтран 40 суха килкепи

кăларнă. Пĕр килкепине 4—5 пуса сутнă. Çапла ĕнтĕ пĕр пăт сўсрен 1 тенкĕ йе тата ытларах тупăш курнă.

Вăрçăран кайран вĕрен-кантра йавас ĕç путса ларa пуçларĕ. Ку ĕçе сўс-кантăр пит хакли кансĕрлет. Сăмахран, халĕ пĕр пăт сўс 6 йе 7 тенкĕ тăрат. Пĕр пăт сўсрен лашана хурса çўремелли 15 килкепе тухаť. Пĕр килкепине 50 йе 70 пуса сутаççĕ. Çапла ĕнтĕ пĕр пăт сўсрен 3-4 тенкĕ услам курма пулаť. Анђах ытти çул çинђи-мĕнти расхутсем хакла ларнипе хресђенсем çак тупăша сахал, теççĕ. Сăмахран: сўсне кўресси, пасарсене кайса çўресси хакла ўкет, тупăшĕ пĕртте йулмасť, теççĕ. Çавăнпа та халђхи вăхăтра вĕрен йавса сутакан пит сахал, çукпа пĕрех. Вĕрен-кантра йавас ĕç пĕтсех ларђĕ.

Ман шутпа çак ĕçе копператтиврa пĕрлештерес пулаť. Пĕрлештерессине Ђăвашпроисвотсойус урлă тăвас пулаť. Халăх ĕçлеме пултараť, унăн вăй пур-ха.Çак ĕçе 150-200 киле йахăн тытма (ĕçлеме) пултараççĕ. Пĕр кил пĕр тавлăкра пĕр пăтран кайа мар вĕрен-кантра йавса кăларма пултараť. Çапла вара йалĕпе пĕр уйăхра 4500 пăта йахăн, çултаlăкра 50000 пăта йахăн килкепе-вĕрен йавма пултараççĕ.

Тата çак ĕçе копператсире пĕрлештерсен малалла кайасси ак çакăнтан палăраť. 1919-мĕш çулта пĕр йеврей çынни Порис Йакăвлевиђ Йурон йатлăскер, çак ĕçе Урмар районĕнђи „Кустканат“ йатлă

копператтивра пĕрлештернĕђђĕ. Пĕр вăхăтра ĕç ăнса малалла кайса пынăђђĕ. Анђах 1922-мĕш çулта темĕншĕн пĕтсе хупăнса ларђĕ. Ĕçе ăнса пынине ак çакăнтан курма пулаť: 1921-мĕш выçлăх çул çак копператтива пĕрлештернĕ хресђенсем аванах пурăнса иртерђĕç, теме те йураť. Хăйсем йавнă вĕрен-кантрасене тырă пулнă вырăнсене йарса унтан тырă кӳретђĕç. Çапла вĕсем Çĕпĕртен ђылай тырă кӳђĕç. 1922-мĕш çулта çапах та çав копператтив темĕншĕн сӳнђĕ, унпа пĕрле вĕрен-кантра йавас ĕç те пĕтсе ларђĕ. Çак ĕç пĕтсе ларсассăн нумай çынсем ĕççĕр тăрса йулђĕç. Çак ĕçе тепĕр хут çĕнетсе тапратса йарсан пуриншĕн те пит лайăх пулмалла Хресђенсен, ĕç тупнă майĕпе, пурнăçĕ те вăйлăланса, йусанса пырĕђђĕ.

Т. ТЕМИТĂВ.

3917

Хакĕ 35 пус